Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлĕшĕр!

1937 ДЕКАБĔР 27 ТУНТИКУН 297 (4809)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Совет кулътурин аслă праçникĕ

Совет çĕршывĕнчи хуласемпе йалсем, посолкăсемпе аулсем çинче чаплăн вĕлкĕшекен хĕрлĕ йалавсем çинчи кĕрешӳпе социализăм çĕнтерӳвĕн лозунгĕсене тĕрлĕрен чĕлхепе çырнă. Анчах Совет Союзĕнчи республикăсемпе облаçсене уйăрса тăракан чикĕсем çук. Халăхсен туслăхĕ сталинла хăватла чĕлхи вĕсене пĕрлĕхле, хăватла, никам уйăраймин çемйене пĕрлештерсе тăрат.

Епĕр пурăнакан вăхăтран нисене йулнă вăхатра, 750 çул каялла, Кавказ тăвĕсем пусланнă çĕрте, Руставн йалĕнче Шота хăйĕн нихăçан сӳнмен йурринe йурланă. Пайанхи кун ĕнте Грузире анчах мар, пĕтĕм совет çĕршывĕнче грузинсен кулътури аталанăвĕнчи çак историлĕ куна чаплăн та хаваслăн паллă тăваççĕ.

Руставелин генилĕ поеми мĕн пур совет халăхĕсен йурри пулса тăчĕ. Мескхен çĕршывĕнчи кăнтăр хĕвел çутти ӳкнĕ хаклă йышши ахах поезине кулътурă пуйанлăхне кĕчĕ; унта халăхсен генийĕсемпе талантĕсен йачĕсем сӳнмен çутăпа йалтăртатса тăраççĕ.

Руставели йубилейĕ—пирĕн вăйа, социализăм çĕршывĕн вăйне кăтартакан çутă демонстраци. Вăл—ленинла сталинла наци политики çĕнтерӳвĕн демонстрацийĕ. Пирĕн çĕршыври нумай халăхсем пĕрле, пĕр йалав айĕнче, Ленин—Сталин партийĕн йалавĕ айĕнче, пĕр пулса пурăнаççĕ, пĕрле çĕнĕ пурнăç тăваççĕ, хăйсен кулътурине, формипе нацилĕ, содержанипе социализăмла кулътурине, аталантарса пыраççĕ.

Сталин йулташ Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайлă 8-мĕш Съезчĕнче тунă историлĕ докладĕнче совет халăхĕсен туслăхĕ çинчен чылай чарăнса тăчĕ. Вăл социализăм никĕсĕ çине нумай нацилĕ государства тунă опыт пĕтĕмпех ăнăçлă пулчĕ, терĕ. Мĕнрен килчĕ-ха çав çĕнтерӳ? Сталин йулташ çапла каларĕ:

„Нацисем хушшинчи çапăçусен тĕп организаторĕсем пулса тăракан експлоататорла классем çукки; пĕрне-пĕри шанманнине саракан тата националисла харсăрлăха чĕртсе йаракан експлоатаци çукки; кирек мĕнле пусмăрлăха та кирĕç тăракан тата интернационализăм идейисене тĕрĕс тытса пыракан рабочи клас влаçра тăни; хуçалăхпа обществăла пурнăçăн пур тĕлĕсенче те халăхсене пĕрне-пĕри пулăшас ĕçе чăннипех пурнăçа кĕртсе пыни; йулашкинчен ССР Союзĕнчи халăхсен нацилĕ кулътури, формипе нацилĕ, ăшчикĕпе социализăмла кулътури чечекленсе ӳсни,—çаксем пурте тата ытти çавнашкал фактсем ССР Союзĕнчи халăхсен сăн-сăпатне тĕпренех улăштарса йачĕç, вĕсем хушшинче пĕрне-пĕри шанми туйăм пĕтрĕ, вĕсем хушшинче пĕр-пĕринпе килĕшсе туслашса пурăнас туйăм вăйланса карĕ,—çапла вара, пĕрлĕхлĕ союзлă государства системинче халăхсем пĕр-пĕринпе чăн-чăнах тăванла килĕштерсе ĕçлесе пурăнасси йĕркеленсе çитрĕ."

Чапла кун—1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă кун совет халăхĕсем тăванла пĕр пулса пурăннине кăтартса параканни пулчĕ. ССР Союзĕнчи пур халăхсен ывăлĕсем те пĕрлĕхлĕ туйăмпа, пĕрлĕхлĕ çĕкленӳпе хавасла. Вĕсем хăйсен политикăлла тата моралълĕ пĕрлĕхне, хăйсем тăван çĕршыва йуратнине, Ленин—Сталин партийĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăнине кăтартрĕç.

Пирĕн нумай нацилĕ литературă, йурăсем, театр, живопис, пирĕн университетсемпе аслăлăх институчĕсем совет халăхĕсен пĕрлĕхлĕ пулса пурăннине кăтартса тăраççĕ. Кашни халăх хăйĕн чĕлхипе вĕренет, йурлат, çĕнĕрен ĕçсем туса пырат, хăйĕн çĕкленӳвĕн чи лайăх çимĕçĕсене наукăпа кулътурăн пĕтĕмĕшле союзлă пуйанлăхне хывса, ăна сарса пуйанлатса пырат.

Вырăс халăхĕн аслă поечĕ—Пушкинăн йубилейне пирĕн çĕршыври мĕн пур халăх уйавларĕ. Пушкин сăвви вилĕмсĕр, унăн илемлĕхĕ тата чăнлăхĕ белоруса та, туркмена та, таджика та хумхантарат. Дагестан ашугĕн—Сулейманăн йуррисем, казахсен акынĕн—Джамбулăн сăввисен музыкăлă йĕркисем вырăс йалĕсенче те, çавăн пекех, тата Украина йалĕсенче те паллă.

Белоруссенпе грузинсем Украинăн Минск тата Тбилиси хулисене пына опера театрне мухтаса хыттăн çупаççĕ. Мускав çыннисем грузинсен „Даиси" оперине те, казахсен „Жалбыр" оперине те, Украина халăхĕн „Наталка-Полтавка" оперине те хăйсен тăван искусстви пек, пысăк савăнăçпа кĕтсе илеççĕ.

Грузинсен генийĕн „Витязь в тигровой шкуре" йатлă поеми халăхĕн пысăк художествăлă вăйĕпе, хăйĕн тарăн шухăшлă содержанийĕпе пĕтĕм етемлĕхĕн, чи малтан унăн малта пыракан отрачĕн—совет халăхĕсен, социализăм тунă çынсен, илемлĕхпе чăнлăхшăн кĕрешекенсен хаклă пурлăхĕ пулса тăрат.

Руставели поемин геройĕ, Автандил йурланине пĕтĕм çутçанталăка кăна мар, пур çынсем, пур халăхсем итлеççĕ... „Французсем, вырăссем тата арабсем, Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ йалтах итлеççĕ". Аслă йурăçăсене поетсен вăйлă шухăшĕ—вĕсен йуррисен йанравлă йухăмĕ—пĕтĕм пĕвесене, пĕтĕм нацилĕ чăрмансене çĕмĕрсе тăкмала.

Социализăм çĕршывĕнче поетăн шухăшĕ пурнăça кĕчĕ. Руставели творчестви пире те, сталинла тапхăрти çынсене, çывăх йанравлă. Вăл пирĕншĕн ăнланмала, çывăх, мĕншĕн тесен, вăл тĕнче çине, пурнăç çине таса куçпа, савăнăçлăн пăхнă. Шота Руставели, вăтам ĕмĕрсенчи тĕнчене ирсĕр, етеме хирĕçле йала саракансен кăшкăрашуне путарса, етем çинчен, унăн ирĕклĕх, йурату, савăнăç прави çинчен йурланă.

Туслăх çинчен сăвăласа йурлат Руставели. Пысăк туслăх, ырлăх, принципла туслăх. Унăн геройĕсем, тĕрлĕ националънăç çыннисем, хăйсен шухăшĕ, тĕллевĕ, кăмăлĕ пĕрлĕхле пулни тăрăх туслăннăскерсем. Икĕпитлĕ çынсене хирĕç, изменниксемпе предателсене хирĕç йанăрат поет сасси. „Сутăнчăкла та ултавлă çынна кураймастăп". „Тус мартан та хăрушăрах тăшман пулсан тусу".

Йурату çинчен йурлат Руставели. Анчах хĕсĕк кăкăрлă лирикăн селехине йухтарса йуратни мар. Поемăри геройăн хăй савнине сăмахпа мар, куççулпе мар, тăван çĕршыва тăшмансенчен хĕçпăшалпа хӳтленипе йуратма тивĕçлĕ пуласси çинчен калат. Çака вăл хăйсен çывăх çыннисене совет чиккисене сыхлама, сывлăш пространствине кĕрешсе илме, тăван çĕршывшăн тĕлĕнмеле ĕçсем тума йаракан пирĕн лайăх хĕрарăмсем—ача амăшĕсем, арăмсем, хĕрупраçсем çинчен асаилтермест-и вара?

Нестан хăй йуратнă Тариеле калат: „Епĕ ылханлă тăшмансене хамăрăн патшалăха хыпса çăтса йама памастăп, вĕсене Индирен пĕр драхмă*) та пама ирĕк памăп". Тăван çĕршыва çапла ырă йуратни пирĕншĕн сисĕмлĕ мар-и? Епĕр совет çĕрĕн кашни вершукне тăшмансенчен сыхлама хатĕр мар-и?

Пурнăç çинчен йурлат Руставели. „Пурнăçа йуратап, ăна пытармастăп" тесе калат Автандил. Анчах çав вăхăтрах çакна хушат: „Чапсăр кунсенчи намăса чăтаччен мухтавлă вилĕмпе вилни лайăхрах". Çак сăмахсем халĕ те сталинла саманара пурăнакан çынсемшĕн çывăх, пирĕн рыцарсене, геройсене çывăх. „Чĕркуççи çинче тарса пурăниччен, ура çинче тăрса вилни лайăхрах" тесе каланă Долорес Ибаррури Мадрида паттăрăн сыхлакансене чĕнсе каланинче. Пурнăç вăл пысăк идеалсемшĕн пурăнсан анчах илемлĕ.

„Пурăнас пулат пурнăçшăн, пурнăçа пурнăçшăн парас пулат".

Пурнăçа çутатса тăракан çакăн пек пысăк идеалсенчен пĕри вăл—тăван çĕршыва йуратни. „Çĕршыв, туссен савăнăçне чечеклесе тăшмансен выçă куçне тĕттĕмлетет". Пайан епĕр хамăрăн чечекленекен çĕршыв çине, хамăрăн илемлĕ тăван çĕршыв çине пăхса çак сăмахсене тепĕр хут калама пултаратпăр, пирĕн çĕршывăн çĕнтерӳвĕсем тăшмансене тулласш тараççĕ.

Вăтам ĕмĕрсенчи тĕшмĕш çыннисем Руставели поемине вутта пăрахса çунтарнă. Вунтăххăрăмĕш ĕмĕрти тĕшмĕш çыннисем—шовинисла интеллигенци—вăл поемăна вутта пăрахайман ĕнтĕ, анчах ăна „тасаран Грузи произведенийĕ" вырăнне кăна хунă, вăл пĕтĕм тĕнче етемлĕхĕшĕн пысăк вырăнта тăнине йышăнман.

Халъхи тапхăрти тĕшмĕш çыннисем—буржуалă националиссем çак çулпах пынă. Вĕсем ытти тăшмансемпе пĕрле халăхсене пĕр-пĕринчен йĕпле карта карса уйăрасшăн, вĕсем халăха пĕр-пĕринчен политикă йенĕпе уйăрса йарасшăн пулнă, Совет Союзне ваклăсшăн пулнă. Кун пек пулаймĕ! Совет Союз халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йалавĕпе пырса, пĕр килйышри пек пулса социализăмла кулътурă тăват.

Пайанхи кун пĕтĕм совет халăхĕ кулътурăн аслă уйав йачĕпе Грузине саламлат. Совет халăхĕ çав уйава йут хăнасем пек пулса мар, унăн активлă çыннисем пулса хутшăнат. Шота Руставели—Грузи халăхĕн аслă ывăлĕ—Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсен ывăлĕ.

(„Правда" умстатйи).

* Укçа шучĕ.

Испанири фронтсенче

Республиканецсем Теруел патĕнче темиçе çĕр пулемет туртса илнĕ

Хĕвелтухăç (Арагони) фрончĕн Теруел участкинче (ку участкă халъ хуларан 10—12 километр айакра тăрат) декабĕрĕн 23—24-мĕшĕсенче фашиссем чылай атакăсем тунă. Республикă çарĕсем вăл атакăсене пурне те сирсе йанă. Фашиссем йăвăр çухатусем тӳснĕ.

Теруеле йышăнса илнĕ чухне республиканецсем питĕ нумай хĕçпăшал тата снарйажени туртса илнĕ. Темиçе çĕр пулемет, нумай орудисем, вăл шутран Германире туса кăларнă зенитлă тупăсем те туртса илнĕ.

Йĕри-тавра хупăрласа илнĕ хула çине снарйадсемпе питĕ хайаррăн персе тăнă пулсан та, хулара пурăнмали çурт йĕрсем сахал сийен курнă. Республикă салтакĕсем хулана тасатаççĕ тата тупăран пенĕ чух вилнĕ çынсене тупса пытараççĕ.

Центрти (Мадрид патĕнчи) фронтра пăлхавçăсен чаçĕсем вырнаçнă çĕре республикă авиацийĕ питĕ нумай прокламацисем пăрахнă, вăл прокламацисем çине республиканецсем Арагони фронтĕнче калама çук чаплă çĕнтерӳ туни çинчен çырнă.

Республиканецсем Теруел хулине туртса илнĕ май, сурçĕр Испанире пăлхавçăсен салтакĕсем фронта кайма килĕшмесĕр восстани тунă

(ТАСС).

Теруел патĕнче тунă çĕнтерӳ халăх хастарлăхне хăпартса хăйулантарат

Хозе Диас Теруеле йышăннин пахалăхĕ çинчен

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 25-мĕш (ТАСС). „Френте Рохо" хаçат Испани компартин генералънай секретарĕ Хозе Диас йулташăн республиканецсем Теруел хулине тытса илнин пахалăхе çинчен çырнă статйине пичетлесе кăларнă.

Хозе Диас Теруле тытса илни республикăлă Испанире пысăк çĕкленӳ туни çинчен кăтартса парса, çапла çырат:

— „Пăлхавçăсем йышăнса тăракан территоринчи пиншер çынсем çак çĕнтерӳве саламлаççĕ, вăл çĕнтерӳ Испани республикине татăклă çĕнтерӳ тума малашлăх уçса парат".

„Теруел,—тесе çырат Хозе Диас,—республикă хĕçпăшалĕн пĕрремĕш çĕнтерӳвĕ мар. Вăл çĕнтерӳ халăх çарĕ тунă чылай çитĕнӳсен малали пулат, тесе калама йурат. Мадрида паттăрăн хӳтлени, Харама тата Гвадалахара фронтĕнчи çитĕнӳсен, унтан Брунете тата Белчите секторĕсенче тунă çитĕнӳсем тата, йулашкинчен, Теруеле тытса илнипе вĕçленнĕ пысăк наступлени,—çак вăл пĕтĕм çар организацийĕ, командовани, политикăлă комиссарсен институчĕ, оборонăра та, тапăнса пынă чухне те пĕрлĕх тата та çапăçу пултарулăхĕ вĕçĕмсĕр йусанса пыни пулат. Çакăнта ĕнтĕ çĕршывăн пĕтĕм прогрессĕ палăрса тăрат, вăл прогресс Испани халăхĕ Кабалъйеро правителствинчен хăтăлнă хыççăн ытларах вăйланма пуçларĕ. Кабалъйеро правителстви—чуман правителствă пулнипе, расколъникла ĕçлесе пынипе тата политикăна хăйĕн уйрăм интересĕсемшĕн тытса пынипе çĕнтерӳ тума чăрмантарса тăнă".

Теруел патĕнче çĕнтерни вăл—пĕтĕм Испани халăхĕн çĕнтерӳвĕ, унăн пĕрлĕхĕн çĕнтерӳвĕ, тесе паллă тăват Диас.

„Анчах та фашисăм капитулъаци тумаст-ха,—тесе çырат Хозе Диас.—Италипе Германи фашисăмĕ Испани халăхне чура туса хурас тата Йевропăри демократилĕ çĕршывсене хирĕç вăрçă пуçарма пулăшакан позицисем çĕнсе илес ĕмĕте пăрахăçа кăларман-ха. Йалтах урăхла, фашисăм татах та ытларах вăй хурса тăрăшĕ, çар хатĕрĕсемпе çарсене татах та ытларах пухса килме хатĕрленĕ. Çĕнтерес тесен, пирĕн те хамăрăн пĕтĕм вăйсене пуçтарса çине тăмала. Пирĕн çара тата хăватлăрах тумала, тыла тăшмансенчен тасатмала, тата, пуринчен ытларах, нихăçанхинчен те вăйлă, анлă та тĕреклĕ пĕрлĕх тумала".

Компарти çак çулпа пыма пулат тата Испанири фашисăма хирĕçлемĕн пур вăйсем те çак çулпах пырасса компарти çирĕп шанса тăрат, тесе паллă тăват Хозе Диас.

Республикăлă Испани. Художникĕсем халăх фрончĕшĕн, фашисла интервентсемпе вĕсене пулăшакансене хирĕç кĕрешме чĕнекен плакатсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: „Рабочисем, хресченсем, салтаксем интеллигентсем Каталонири Социалиссен пĕрлешӳлĕ парти ретне вăйлатăр" йатлă плакат.

(Союзфото).

Шанхайра совета хирĕçле провокаци тунă

ШАНХАЙ, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Декаберĕн 24-мĕшĕнче тăхăр сехетре каçхине Шанхайри Франци концессийĕн территоринче ССР Союзĕн гражданĕсен клубĕн правлени членĕнче тăракан Друри инженерăн хватерне паллă мар шурбандитсем гранатă пăрахнă. Гранатă тĕпренчĕкĕсем тивнипе Друри çăмăл аманнă.

Çав кунах вуннпĕр сехетре каçхине пĕтĕм тĕнчери сеттлъмент территоринчи „Интурист" агенствин çуртне бомбă пăрахнă. Бомбă питĕ вăйлă çурăлнипе агенства витринин кантăкĕсем çĕç мар, тата урам урла ларакан çуртсен кантăкĕсем те ваннă. Бомбă çурăлнинчен „Интуристра" никам та сийен курман, мĕншĕн тесен çĕрле пирки унта никам та пулман. Пӳр сведенисем тăрăх, бомбăна „Интурист" кантурĕ патне автомашинăпа пынă паллă мар çынсем пăрахнă.

Шанхайа Йапони çарĕсем йышăнса илнĕренпе çавăн пек бандитла ĕç тăваттăмĕш хут пулнă ĕнтĕ. Çавăн пек бандитисăм вырăнти шургвардейецсем тата, паллах, Йапони разведки хушнипе пулнă (Йапони разведкин ку тĕлĕшпе пысăк опыт пур, ун çинчен Таньцзинре совет консулъстви çине тапăннă тăрăх та калама пулат). Пĕтĕм тĕнчери сеттлъмент (квартал) полицийĕ тата Франци концессийĕ нимĕн те туманни, те хăй çине çавăрăнтарса пăхтарат. Ку полици чи пăтранчăклă преступленисене те хăвăрт та ăнăçлăн тупса палăртат, анчах та, хула варĕнчи çуртсем патне уççăнах бомбăсемпе пыракан тата хăйсен терророла ĕçĕсене наказанисĕр тăвакан „тытмала мар" бандитсене тупма тăрсан шанмала мар „вăйсăр" пулат.

Йапони правителствин ответлă ноти

НЬЙУ-ЙОРК, декабĕрĕн 25мĕш, (ТАСС). Америкă парохочĕсемпе „ПЭНЭЙ" канонеркăна путарни пирки государствă департаменчĕ (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен йутçĕршыв ĕçĕсен министерстви) Йапони правителствинчен ответлă нотă илнĕ. Хăйĕн нотинче Йапони правителстви „ПЭНЭЙ" канонеркă çине бомба пăрахасси „йăнăш" пулнă тесе çирĕплетет тата бомбă пăрахнăшăн ответлă пулнă авиаци вăйĕсен началъникне улăштарса Китайран чĕнсе илнĕ, тесе кăтартса парат. Йапони правителстви Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителствине çапла ĕненте-рет: „Йапони правителстви Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен тата ытти державăсен прависене пăсмала марри çинчен тата вĕсен интересĕсене хутшăнас марри çинчен тунă инструкцине пăхăнса тăрасси çине, халичченхи пек мар, тата ытларах çавăрăнса пăхма çар влаçĕсемпе тинĕс влаçĕсене, çавăн пекех йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине татăклă приказ пачĕ".

Государствă департаменчĕ пайан Йапони нотине нимĕнле комментарисĕрех пичетлесе кăларнă.

Хура тинĕс çинче вăйлă штором пулнă

ТУАПСЕ, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче Хура тинĕс çинче штором вăйланса кайнă, штором вăйĕ 10 балла çитет Туапсе порчĕ патĕнче тулашри рейдра хăй ишме пултарайман „Азнефть" йатлă танкер путнă. Капитан Калинин й. тата, буфетчик Пражма й. вилнĕ.

Новороссийск патĕнче нефт тултармали „Тендра" йатлă бăркаспа „Челенджик" буксир инкек курнă. Вĕсене „Аванесов" танкер, „Челъускинец" буксир тата „Луначарский" пароход çăлнă.

Новороссийск портĕнче тăракан „Менжинский" парохода штором хăйăр çине кăларса пăрахнă. Халъхи вăхăтра унта „Кубань" теплоход пынă, теплоход команди судйăна çăлма тăрăшат.

ОДЕССА, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). „Пенай" пароход уçă тинĕсре-чухнĕ штором пуçланса кайнă. „Котовский" теплоход Херсонран Одессăна черетлĕ рейса тухса кайма пултараймăн. Крымпа Кавказ хушшинче çӳрекен „Абхазия" тата „Крым" експрессем пĕр талăк кайа йулса кайаççĕ.

Хура тинĕс пароходстви управленийĕнчен илнĕ йулашки сведенисем тăрăх, ĕнер пуçланнă штором пăхăйăн лăпланнă.

Агитаторсем халăх хушшинче ĕçлеççĕ

ЛЕНИНГРАД, декабĕрĕн 24-мĕш. (ТАСС). Суйлав кампани вăхăтĕнче Мускав районĕнчи ЖАКТ семпе агитпунктсенче икĕ пин ытла калама çук чаплă агитаторсем палăрнă, вĕсенчен 294 çын партире тăман агитаторсем, пуринчен ытла килхуçи хĕрарăмĕсем.

ПСК(б)П Мускав райкомĕ çак партири тата пăртире мар болъшевиксен-агитаторсен кадрне çирĕплетсе хăварма йышăннă.

Агитаторсемпе беседчиксем пурте суйлав кампани вăхăтĕнче тунă агитпунктсемпе политкружоксенчи ĕçе малашне те туса пыраççĕ. Кулътурă çурчĕсемпе клубсем политикăлă-массăлă ĕçе организациленĕ çĕрте агитпунктсене пулăшу параççĕ.

Суйлав кампани вăхăтĕнче палăрнă агитаторсемпе беседчиксен çĕнĕ кадрĕсене çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе ПСК(б)П Василеостровск райкомĕ пысăк ĕç туса иртерет. ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă хыççăн райком парти комитечĕсен секретарĕсене тата доверенăй пулса ĕçленĕ йулташсене пухнă. Пуху килçуртсенчи агитацилĕ ĕçе малала та туса пыма йышăннă.

„Испани халăхĕ фашисăмпа кĕрешни". тата „ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тултарни" çинчен инструктивлă докладсем итлесен, агитаторсемпе беседчиксем çак темăсемпе килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче калаçусем туса иртернĕ. Темиçе жактри килхуçи хĕрарăмĕсен пĕрлешӳлĕ пухăвĕсене тума хатĕрленеççĕ, вăл пухусенче „Китай халăхĕ хăй никама та пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешни" çинчен лекцисем вулаççĕ.

Совет писателĕсен Союзĕн пленумĕ

Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче Тбилисире генилĕ поетăн—Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре" йатлă вилĕмсĕр поеми 750 çул тултарнă йатпа совет писателĕсен Союзĕн пилĕкĕмĕш пленумĕ уçăлнă. Пленума вуннпĕр союзлă республикăри писателĕсем, искусствă работникĕсем, стахановецсем, тăванлă халăхсен делегачĕсем, Грузири парти, совет тата профсойуз общественнăçĕсен представителĕсем пынă.

(ТАСС).

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРĂХ

◆ Горловкăра (Донбас) нумай пулмаст кăмрăксене çĕр айĕнче газификацилекен çурмапромышленнăçлă опытлă станци ĕçе йанă. Ку станци Совет Союзĕнче те тата тĕнчере те пĕрремĕш станци шутланат. Тарăн çĕр айĕнче искуственнăй майпа пушар тăваççĕ, кăмрăк çунса газ пулат. Вăл газ скважина витĕр çӳле тухат. Газ енергетикăлă çунтартармали паха йапала. Лисичанскра (Донбас, çавăн пек иккĕмĕш станци тăваççĕ. Черетре—Мускав çывăхĕнчи бассейнра станци тăвасси.

◆ Уралти машинăсем тăвакан заводăн сборочнăй цехĕнче ССР Союзĕнчи чи пысăк 1.300 тонна кĕрекен миксер тăваççĕ. Миксер вăл шăратса кăларнă шĕвĕ чукуна усрамали гигантла резервуар. Ана пирĕн çĕршывра малтанхи хут тăваççĕ. Миксера „Запорожсталъ" валъли хатĕрлеççĕ.

◆ Винница облаçĕнчи колхозниксен çемйисене бӳджет тĕлĕшпе тĕпчесе тухнă. Ку тĕпчев колхозсенче сĕт-çу продуктисем çийесси 1936 çулхипе танлаштарсан 200 процента йахăн ӳснине, пулă продуктисем çийесси—219 процент, тĕрлĕрен çусем—726 процент, тумтирсемпе атă-пушмаксем илсе тăкаклани 250 процент ӳснине палăртнă.

◆ Донри станицăсенче çĕнĕ çул тĕлне вуннпĕр йалта универсаллă пысăк магазинсем уçăлаççĕ.

Китайри вăрçă

Тĕп фронтра Ханчжоу районĕнче халъ те вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче партизансен 700 çынлă отрйачĕ Уху хули çине (Нанкинран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех) тапăннă. Отрйад хулана виçĕ йенчен атакăланă. Çапăçнă вăхăтра йапонецсем йумай вилнĕ.

Тĕп фронтăн ытти участкисенче, çавнашкалах тата çурçĕр Китай фронтĕнче те пару-тăру улшăнмасăрах тăрат.

(ТАСС).

Йапонецсен Шанхайри пукане „правителстви" арканса кайат

ШАНХАЙ, декабĕрĕн 24-мĕш. Йапонецсем Шанхайри Путун районĕнче тунă „автономлă правителства" текен правителствă йапонецсем ĕмĕтленнĕ пек пулман. Йапонецсем Шанхай хулин пуçлăхне лартнă китайла калаçма пултарай ман Сӳй Си-венъ çине — Йапони войенщчини лартнă çынпа ĕç тума килĕшмен Китай халăхĕ ташмала пăхат. Шанхай хули самоуправленин служащчисем пулнă китайецсем Сӳй Си-венъ патне ĕçе кĕме килĕшмесĕр татăклă хирĕçеççĕ.

Йапонецсен пукане „правителстви" куçа-кĕретĕнех арканса кайат. Йапонецсем ун вырăнне пĕтĕм Шанхайа гражданла тытса тăракан урăх организаци тумă тăнă. Анчах вĕсем кунта та пысăк йăвăрлăх умне тухса тăнă. Китайецсем ку организацире те хутшăнма килĕшмен.

(ТАСС).

Вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре татăклă улшăну кирлĕ

ВĂРНАР, (хамăр корр.). Вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана вăхăтра тултарасси пысăк та ответлă ĕç иккенне лайăх ăнланса илсе, районри хăшпĕр колхозсем вылҍăх-чĕрлĕхе ĕрчетессишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Акă Туçи Мăратри „Клевер“ колхоз кăçалхи çул вылҍăх-чĕрлĕх усрамали плана ытлашшипех тултарчĕ. Район панă план тăрăх колхозăн кăçал 102 пуç лаша, 35 пуç сысна, 40 пуç сурăх пулмала пулнă пулсан, паянхи кун колхозăн 107 пуç лаша, 58 пуç сысна, 42 пуç сурăх пур. Ку вылҍăхсем валҍи колхоз çителĕклĕ таран вылҍăх апачĕ, хĕл сиввинчен хăтармалăх ăшă вите хатĕрленĕ.

Районра „Клевер“ колхоз пек вылҍăх-чĕрлĕхшĕн тăрăшакан колхозсем татах та пур. Булатово, Сендимеркино, Рунгă, т. ыт. те.

Анчах хăшпĕр колхозсем вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана тултарассипе чăтма çук кайра пыраççĕ. Акă: Уйкасри „Комсомолец“ колхозра район панă план тăрăх 53 лаша, 6 ĕне, 15 сурăх пулмала пулнă пулсан, паянхи куна мĕн пурĕ те 44 лаша 1 ĕне, 7 сурăх çеç. Район панă плана тултарас пулсан та га 9 лаша, 5 ĕне, 8 сурăх çитмест. Кунсăр пуçне, вылҍăхсене усрама çителĕклĕ таран ăшă çуртсем те çук. Колхоз правленийĕ кунта вылҍăх-чĕрлĕхе йышлантарасси çине чăтма çук начар пăхать.

Çавăн пекех Çĕнйал Нурăс, Çĕнйаххакасси, Кушик, Епшик, Айкаш, Çавалкас Хирпуç т. ыт. те вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана пурнăçлас çĕрте чăтма çук кайра пыраççĕ.

Нумай колхозсем вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана тултарасси, вылҍăх-чĕрлĕх валҍи ăшă çуртсем, çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрлесе хурасси çинчен мансах кайаççĕ. Акă: Мачамăш, Кăмпал, Кив Йаххакасси колхозсем паянхи куна çитсе те вылҍăхсем валҍи ăшă вите туса парасси çинчен шутласа та пăхмасçĕ-ха. Вылҍăхсем йапăх сарайсенче тăраççĕ.

Вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри колхозсенчи çитменлĕхсене районри çĕрĕç пайĕ аванах пĕлсе тăрать пулин те, ĕçре татăклă улшăну тăвасси çинчен нимĕн те шутламасть. Вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен Семенов йулташ паянхи куна çитсе те районри 85 колхозран ĕç мĕнле тăнине 15 колхозрине çеç пĕлет.

Вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре анлă кĕрешӳ пуçласа йарса, çĕнĕ çула вылҍăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана пĕтĕмĕшпех тултарнипе кĕтсе илмеле.

Ст. Филиппов.
Ник. Козлов.

Çураки çинчен маннă колхозсем

ТĂВАЙ. Çуракине хатĕрленесси çинчен районра кăçал пачах манса кайнă темеле. Чылай колхозсем йĕркесĕр ĕçлеççĕ.

Йенĕш Нăрвашри „Красная Чувашия“ колхозра вăрлăх участки çинче туса илнĕ тырра пĕтĕмпех ытти тырăпа хутăштарса йанă. Çĕнĕ Пуйанкассинчи „Болҍшевикла колхозшăн“ колхоз вăрлăх валҍи туса илнĕ тырра лашасене çитерсе тăнă тата шăтăк-çурăклă ампара хурса çăмăрпа йĕпетнĕ. Кĕршепе Сăхăпуç колхозĕсем икĕ тĕслĕ тулă суртне пĕр çĕре хурса хутăштарнă.

Мучарти „25-ое Октября“ колхозăн йалхуçалăх машинисем халĕ те йур айĕнче лараççĕ. Çавăн пекех минираллă ăнăхсене хатĕрлес ĕç те колхозсенче пит начар пырать. Колхозсене панă 210 тоннă фосфорит ăнăхĕ Вăрнарти заводрах выртать.

Уйрăмăнах кунта Улҍанкăри „Шурăмпуç“ колхоз начар ĕçлет. Вăл халҍ те вăрлăхсене суртлама, машинсене йусама тытăнман. Плугсемпе сӳресене те йусаман. Уйа тислĕк, торф кăларасси çинчен каласмали те çук. Çавăн пекех кĕл, фекали пухасси те, уйра йур тытасси те начар пырать.

Райçĕрĕç пайĕ йенчен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсене йертсе пыни нимĕн те курăнмасть.

Ал. Пикишкин.

Хĕрлĕ обозсемпе пырса леçеççĕ

ПАТĂРЙЕЛ (телефонпа). Районри колхозсем ĕçкунĕсем çине тивекен тупăшсене валеçсе çитереççĕ. Чылай колхозсенчи колхозниксем кăçал 2—3 çул пурăнмалăх тырă илеççĕ. Акă Хĕрлĕ Туçари Кокшаков семйи—713 пăт тырă илчĕ. Çак тырра колхоз вĕсене 29 лавпа хĕрлĕ обозпа леçсе пачĕ. Çакăн пекех Анат Туçари „Çăлтăр“ колхоз членĕ В. Долгов 900 пăт, Енĕл йалĕнчи И. Иванова—500 пăт илчĕ. М. Иванова кăçал çак тырăпа çĕнĕ пӳрт лартма шутлать. Карабаш Шăмăршăри В. Илларионов семйи 1505 ĕçкунĕ туса 940 пăт, Кив Ахпӳртри „РОКК“ колхозри Ф. Волков семйи 1110 пăт П. Федоров—1070 пăт, Ф. Кашкин—954 пăт тырă илчĕç. Çаксем пек 500—1000 пăт илекен семйесем, районри ытти колхозсенче те чылай.

Пушкин.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳре

Мăн - Йекĕтри (Йетĕрне р.) „Хĕрлĕ Октабĕр“ колхозра тырпул тухăçне хăпартассипе тăрăшса ĕçлеççĕ. 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе халĕ уйсенче йур тытаççĕ. Торф турттараççĕ. Унсăр пуçне тата колхозри бригадăсем хĕрсех уйа çĕнĕ тислĕк тăкаççĕ.

Халĕ мĕн пурĕ 1400 лав тислĕк тата 40 пичке тислĕк шывĕ уйа тăкнă. Ку тĕлĕшпе пур бригадăсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Т. Йарандайкин.

Торф кăлараççĕ

Ик-виç çул хушши ĕнтĕ Магаç йалсоветĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) колхозсем хăйсен çĕресене торф тăкса çĕнетеççĕ. Торф тăкса çĕнетнĕ вырăнта тырпул тухăçĕ ӳссе пырать. Çитес çулта кирек те мĕнле çанталăк пулсан та, вăйлă тырпул туса илес тесе, çав йалсоветри пур колхозсем те çĕре çĕнетмели йапаласем хатĕрлеме тытăнчĕç. Кăçал хĕле кĕнерепе „Малала“ тата „Октабĕр“ колхозсем 1500 лав ытларах хире торф турттарчĕç. Çакăн пекех халҍĕ Ирĕх Çырми колхозĕ те кашни кунах 10 лашапа Мĕшĕл йалĕ сывăхĕнчи улăхран торф турттарать.

Çак кунсенчех Калуккассинчи „Пĕрлешӳ“, Кудемерти „Трудовик“, Кивĕ Акчурари „Ленин çулĕпе“, Еплесри „Хĕрлĕ Паттăр“ тата ытти колхозсем те Кудемер сывăхĕнчи улăхран торф кăларас ĕçе тытăнаççĕ.

В. В.

Ватă колхозниксем савăнаççĕ

Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозра ватă стахановецсем чылайах шутланаççĕ. Вĕсем халҍхи вăхăтра тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Константинов Василий, Федоров Степан, Захаров Йаким тата Захарова Йевдокийа—кусем пурĕшĕ те 70 çултан иртнĕ колхозниксем. Çак 70 çултан иртнĕ ватă стахановецсем пĕр ĕçрен йулмасăр ĕçлеççĕ. Кăçал: В. Константинов 216 ĕçкунĕ, Федоров Степан 193 ĕçкунĕ, Захаров Йаким 305 ĕçкунĕ, Захарова Йевдокийа 210 ĕçкунĕ тунă. Кăçал колхоз ĕçкунĕ пуçне çур пăт тырă тивет, ватамран çак стахановецсем 100 шер пăт тырă илеççĕ.

Савăнаççĕ ватă стахановецсем. Ĕлĕкхи вăхăтра çакăн чухлĕ тырă туса илме пултарнă-ши, çак ĕçхресченĕсем? Çук. Унăн чĕрекне те илме пултарайман. Халҍ ку стахановецсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Кулленхи нормăна 150 шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Колхоз паянхи куна торф—1680 лав, тислĕк—2300 лав уйа кăларнă. Йур 24 гектар çинче тытнă. Çак ĕçсемпе 2—5 мĕн бригадăсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Исайев.

Йефросинийа Харитонова

Йефросинийа Харитонова хăйĕн ашшĕ вилнĕ вăхăтра 3 çулхи ача пулнă. Унăн ашшĕ 1919 çулта граждан вăрçинче вилнĕ. Çавăнпа та Йефросинийа хăйĕн ашшĕне астумасть, ăна вăл курман. Йефросинийа амăшĕпе анчах тăрса йулнă.

9 çула çитсен Йефросинийа йалти шкула вĕренме кайать. Йалтан вĕренсе тухсан Хапăсри колхоз çамрăкĕсен шкулне вĕренме кĕрет. Анчах, кунта пĕр çул вĕреннĕ хыççăн, Йефросинийана малала вĕренме май килмен, ăшă тумтир çуккине пула унăн вĕренме пăрахма тивнĕ.

1930 çулта Çĕнйахакасси йалĕнчи чухăнсемпе ватам хресченсем пухăнса, пуйансен пусмăрĕ айĕнче йухăннă хуçалăхне йусама, çĕнĕ тата пуйан пурнăç тума йалта колхоз организациленĕ. 14 çулхи Йефросинийа хăйĕн амăшĕпе хавасланса колхоза кĕрет. Вĕсем колхозра хастарлă тата тăрăшса ĕçлеме тытăнаççĕ. Йефросинийа часах колхозри паллă ударницă пулать. Колхоз ăна 3 хутчен хаклă йапаласемпе парнелет. 1932 çулта Йефросинийа комсомола кĕрет.

1934 çулта колхоз правленийĕ Йефросинийа Харитоновăна, колхозăн паллă ударницине, трактористсен курсне вĕренме йарать. Йефросинийа питĕ савăннă. Вăл машинăсемпе ĕçлеме вĕренесшĕн пулнă.

1935 çул. Йефросинийа Харитоновна пĕтĕм предметсемпе те лайăх паллăсемпе курсран вĕренсе тухать. Ăна шанса хурçă трактор параççĕ. Унăн пуçĕнче тĕрлĕ шухăш выҍанă.

— Пултарăп-ши епĕ çавнашкал хаклă трактора тытса пыма? Йе ăна тытса пыма пĕлмесĕр пăсăп-ши?—тенĕ вăл.

Çав вăхăтрах машинпа трактор станцин директорĕ пырса унăн кăмăлне хăпартнă:

— Пултаратăн Йефросинийа, пултаратăн. Сансăн пултарулăху хурçă трактора тытса пымалăх çеç мар, ĕçĕ пурне те тума пултаратăн,—тенĕ.

Вăл савăннă. МТС директорĕ çавăн пек калани унăн ĕçлес кăмăлне хăпартнă, хастарлăн ĕçлеме шутланă.

Трактора чĕререн йуратса ĕçлеме тытăннă. Трактора вăхăтра тасатнă, вăхăтра çу сĕрнĕ. 1935 çулта Йефросинийа тракторĕ 935 гектар сухаланă. Вăл МТС-ри паллă трактористкă.

1936 çулта машинпа трактор станцийĕ çумĕнчи комсомол организацийĕ ăна комсомолăн районри VII конференцин делегатне суйласа йарать. Кунта Йефросинийана райком пленумĕн членне, комсомолăн обласри XIII конференцин делегаткине суйлаççĕ. Кунта та Харитоновăна Обкомăн пленум членне суйласа хăвараççĕ. Çав çултах комсомолăн Горький крайĕнчи IV конференцин делегатки пулса Горькине кайать вăл.

1936 çултах машинпа трактор станцийĕ Йефросинийана Канашри йалхуçалăх машинĕсен механизаци шкулне вĕренме йарать. 1937 çулти март уйăхĕн йулашки кунĕсем тĕлнеле шкултан вĕренсе тухса, комбайнеркă тата трактор бригадин бригадирĕ йатне илсе таврăнать.

Машинпа трактор станцине çитсен ăна комбайнеркăна ĕçлеме йамаççĕ, йатарласах организациленĕ хĕрарăмсен трактор бригадине бригадир пулма йараççĕ. Çапла вара Йефросинийа Харитоновна хĕрарăмсен 12-ш номĕрлĕ трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлеме тытăннă.

Унăн бригадинче 6 хĕрача. Вĕсемпе Йефросинийа тĕрлĕ каласусем ирттернĕ. Тракторпа мĕнле ĕçлемелисене кăтартсах пынă. Хăйсен хушшинче социалисăмла ăмăртува анлăн сарса йанă. Çапла ĕçлесе пынипе унăн бригадийĕ кашни трактор пуçне ватамран 790 гектар ытларах сухаланă.

Унăн бригадинче уйрăмăнах комсомолка Радайева Варвара лайăх ĕçлесе пырать. Вăл кăçал пĕрремĕш çул ĕçлет. Трактора питĕ йуратать. Радайева 607 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Çапла вара вăл 1530 тенкĕ укçан, 400 пăта йахăн тĕштырăн ĕçлесе илет.

Йефросинийа Харитоновăна кăçал та комсомолăн районри конференцийĕ райком пленум членне, Обласри конференцийĕ Обком пленум членне вăрттăн (хупăн) сасăласа суйласа хăварчĕ.

Халĕ Харитонова семйи пуйан та кулҍтурлă пурнăçпа пурăнать. Кивĕ, çĕрсе пĕтнĕ пӳрт вырăнне, çĕнĕ те çутă шыçăк пӳрт лартнă. Кил картинче вылҍăх-чĕрлĕх тулли.

Харитонова 700 ĕçкунĕ тунă. Çапла вара вăл кăçал пĕччен 300 пăт ытларах тĕштырă, 1750 тенкĕ укçан илет.

— Мана начар, пур-çуклă, хĕн-хурлă, тăлăххăн çитĕнекен хĕрачана Ленин—Сталин партийĕ çын турĕ. Ленинла комсомол мана вĕрентрĕ. Çакăншăн епĕ пĕтĕм чĕререн савăнатăп. Çитес çура татах та вăйлăрах ĕçлеме пулатăп,—тет Харитонова савăнăçлăн.

Çĕнĕ çула Харитонова хăйĕн бригадинчи тракторсене пĕтĕмĕшпе йусаса çитернипе кĕтсе илет. Унăн бригади 1938 çула стахановла çул туса ĕçлеме пулать.

Ст. Улангай.

Пĕр семйери струнлă оркестр.

Криушри (Куславкка р.) Майоров колхозникĕн семйине пурте струнлă инструментсемпе выҍаççĕ.

Йанвар уйăхĕ—сталинла уйăхлăх

Канашри „Майăн 1-мĕшĕ“ промысла ертелĕн фабрикĕнчи рабочисем декабĕрĕн 22-мĕшĕнче хăйсен пухăвĕнче 1938 çулхи ĕç планне пăхса тухса çирĕплетрĕç. 1938 çулта фабрикăн 2 мĕлйун та 670 пин тенкĕлĕх куллен кирлĕ таварсем туса кăлармала. Ку план кăçалхи планран 86 процент ытларах.

Пухура, 1937 çулăн итогне тунă чухне рабочисем фабрикăн снабжени уйрăмĕ начар ĕçлени çинчен нумай каларĕç. Чĕрĕ таварсем вăхăтра çителĕклĕ тăратман пирки уйрăм цехсем ĕçлемесĕр ларни те пулнă. Снабжени уйрăмĕнче ĕçлекен Баринов, командировкăсене укçа илессишĕн анчах çӳренĕ. Снабжени пайĕн пуçлăхĕ Сергейев фабрикăн планне тултарасшăн сахал тăрашнă. Йăвăç, мунчала вăхăтра тăратман. Чăваш кулҍпромсойузăн снабсбыт кантурĕ те (унта Орлов ĕçленĕ) вăл ĕç çине кирлĕ пек пăхман. Орлов фабрикă ĕçне малала йарасшăн тăрăшас вырăнне, фабрикăн укçа-тенкине салатма тытăннă. Орловпа фабрикă директорĕ Перлов йапаласем илме, тесе Мускава Хрисанов патне 2750 тенкĕ укçа куçарнă. Хрисанов камне ку таранчен те пĕлмеççĕ. Çав укçа халĕ те Хрисанов аллинчех шутланать. Снабжени уйрăмĕнче ĕçлекен Баринов пĕр сĕтел тума 1 кубла метр йăвăç кайнă, тесе отчотсем тунă. Тĕреслесен пĕр сĕтеле тума 0,3 кубла метр йăвăç кайни палăрчĕ. Пуху киревсĕр ĕçлекенсене фабрикăран тасатса çитес çула фабрик ĕçне лайăх организацилемели майсене кăтартса пачĕ. Рабочисем кашнийех тăрăшса, стахановла ĕçлеме пулчĕç. Стахановец Карзаков йулташ çапла каларĕ:

— 1938 çулхи план кăçалхинчен 86 процент пысăкрах. Анчах епĕр ăна ытлашшипех пурнăçлама пултаратпăр. Епĕ йанвар уйăхĕнчи нормăна 200 процент тултарма, çавнашкалах пĕтĕм çулталăк планне ытлашшипех тултарма пулатăп,—терĕ. Обойнăй цех начаҍникĕ Филиппов йулташ йанвар уйăхĕнчи плана 200 процент тултарма пулчĕ.

Столҍарнăй цехра ĕçлекен стахановка Мордвина сталинла уйăхлăх пуçланиччен кашни станок патне деталҍсене пĕр станок патĕнчен теприн станок патне йăтакансем лартма сĕнӳ пачĕ, кун пек тусан ĕç тухăçлăхне 25—30 процент таран хăпартма пулать. Рабочисем плана ытлашшипех тултарма хатĕр. Ертел правленин сталинла уйăхлăха пур йенчен те хатĕрленнипе кĕрес пулсан пирвайах ĕçре чăрмантаракансене фабрикăран тасатмала.

В. Смелов.

Тырпулсемпе тупăшсене валеçес ĕçе мĕн чарса тăрать

ЕЛĔК. Ваçкасси йалсоветне кĕрекен Йурмекейкинă, Рыковкинă, Кĕртекасси колхозĕсенче кăçалхи тырпулсемпе тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме тытăнчĕç. Çак колхозсем тырпулсемпе тупăшсене çак кунсенчех валеçсе кĕтереççĕ.

Анчах Ваçкассинчи Илйич йачĕпе тăракан колхозра тырпулсемпе тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçесси кайа йулса пырать-ха. Колхоз председателĕ Йегор Николайев тырпулсемпе тупăшсене хăвăртрах валеçме тăрăшмасть. Колхоз ку вăхăта çитсе те патшалăха натурплата тыррине 138 пăт парса татман. Çавăнпа тырпулсемпе тупăшсене валеçесси чăсăлса пырать.

Ф. Филиппов.

Студентсем автомобил ĕçне вĕренеççĕ

Чăвашсĕн йалхуçалăх коммунила аслă шкулĕнче автомобил ĕçне вĕренмели кружок организациленĕ. Кружока 80 студент çӳрет. Ку таранччен 10 занҍати туса иртернĕ. Февралҍ уйăхĕ пуçланнă тĕле программăна вĕренсе пĕтерме шутлаççĕ.

Г. Иванов.

Проф. Н. Проппер—Грашченков
ССРС Сывлăха сыхлав халăх комиссарĕн заместителĕ

Кох тупса пани тата туберкулҍозпа кĕрешес ĕç

Туберкулҍоз чирĕпе чирлетерекен микробсене тупни 55 çул тултарчĕ. Ку пахаĕçе учонăй Роберт Кох тунă. (Вăл 1843 çулта çуралнă, 1910 çулта вилнĕ).

Çак социаллă хăрушă чире йертекене тупса, Роберт Кох ĕçлĕх етемлĕхне нимĕнпе танлаштарма çук пысăк пулăшу пачĕ. Çак тапхăртан тин туберкулҍоз чирĕнчен сиплес ĕç ăнсăн пуçланчĕ.

Буржуалă çĕршывсенчи мĕнпур учонăйсем пекех, Кох, çакă етемлĕхĕрĕн питех те кирлĕ ытупа ĕçлесе, правителствăпа общество йенчен нимĕнле пулăшу та курман. Кайрантарах тин, Кох тупни пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăрсан, унăн ĕçне курмасăр тăма пултараймипулсан, Германи правителстви Кохăн аслăлăх ĕçĕпе малала ĕçлеме май туса парать. Ку вăхăтчен аслă учонăйăн пăвăр пурнăç çулĕ тăрăх утса тухмала пулнă.

Аслăлăх ĕçĕпе ĕçлеме хăйĕн пурнăçне майлаштарас тесе, вăл Берлин, Гамбург, Раквиц, Волҍштейн хулисене çитнĕ, анчах унăн ку ĕмĕт ниçта та анăçайман. Пĕчĕкçĕ Волҍштейн хулинче Кох вырăнти санитари врачĕ пулса 8 çул хушши ĕçлет. Пĕчĕк йалу илсе тăнипе, Кох аслăлăх ĕçĕсем валҍи лаборатори те тăвайман. Вăл хăй пӳлĕмĕнче пĕр кĕтес сес уйăрса май тунă, унта вăл пĕр-пĕр чир йерекеннипе йерекен маррине тĕпчесе пĕлме чĕр-чунсем çинче сăнавсем, експериментсем туса иртернĕ. Буржуалă патшалăхĕсенче аслăлăх çыннисем йалавах машкăлра пулнă, халĕ те машкăлрах пулаççĕ. ССР Сойузĕнче кăна наукă, етемлĕх историнче малтанхи хут пуçласа хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнчĕ.

Совет государстви наукăпа учонăйсене тимлĕн пăхать, вĕсене аслăлăх тĕпчевĕсем туса пыма пысăк майсем парать. Пирĕн учонăйсене питех те лайăх условисем туса панă, вĕсем валҍи государствă çĕршер мĕлйун тенкĕ расхутласа, пысăк институтсемпе лабораторисем организацилет. Правителствăпа обществăн çакнашкал тимлĕхĕ çинчен буржуалă çĕршывсенче пĕр учонăй та ĕмĕтленме пултараймасть, Кох та ĕмĕтленме пултарайман.

Пруссин йерекен чирсем уйрăмах вăйлăн саралнă хĕвелтухăçĕнчи обласĕсенче врач пулса ĕçлени, Коха ун чух тин вăй илме пуçланă микробиологине тĕпчесе вĕренес çул çине тухма пулăшать. Кох йерекен чирсен сăлтавĕ вĕтĕ куçа курăнман чĕрчунсем-микробсем пулса тăраççĕ текен Генле анатомăн тĕнĕ, ун чухне тӳрре тухман теорине хисеплекен çын пулнă. Йерекен чирсенчен пуринчен те ытларах саралнă чирĕн — туберкулҍозăн микробĕсене тĕпчесе вĕренме пуçличчен малтан, Кох вылҍăх-чĕрлĕхсем Сĕбĕр йазвине чирлесе тăтăнах вилĕ пынин сăлтавĕсене тарăнăн тĕпчеме тытăнать. Уйрăмах вăл сиби́ркă вăйлăн саралнă вырăнсене урăхла каласан, сибиркă пихăçан пĕтмен вырăнсен хытă тĕпченĕ. Вăл чир саракан вĕтĕ чĕрчунсем, спорăсем тăпрара пурăннине кăтартса панă.

Çак пĕррĕмĕш открыти уйрăм учонăйсем ун хутне кĕнĕ ирни. Кохăн хастарлăхне сӳле сĕнлет. Вăл микроскопа сĕнĕтсе лайăхлатать, микробсене пăхнă çĕрте анилинлă краскăсемпе малтан пуçлаҫа вăл усă курма пуçлать. Çакна пула, вăл, унчченхи микроскоппа пăхса тĕпчеме май пулман тĕрлĕ микробсене тĕпчесе сăнама çĕрте пысăк çитĕнӳсем тăвать.

Микробсене краскăпа сăрласа тĕпчес методикă сумне Кох тепĕр пахаçĕнĕ меслет, микробсене хытă апат: çĕрулмипе желатин çинче пăхса çитĕнтерес меслете хутшăнтарать. Ку вара, Кохпа унăн ученикĕсене чир сăракан микробсен унччченхи асамлă тĕнчине тата тарăнтараххăн кĕрсе кайма пулăшать.

1881 çултан пуçласа Кох туберкулҍоз чирне саракан сăлтавсене тĕпчеме тытăнать. Туберкулҍоз йерекен чир пулса тăнине француз врачĕ Виллеман Кох ĕçлеме пуçлаччченех кăтартса панă. Нумай учонăйсем туберкулҍоз чирне пуçарса йаракан микробсене шырса тупма пăхнă, анчах вĕсем ку ĕçе çителĕклĕ таран ĕнентермелĕх тăтса параймаи. Задачăна Кох татрĕ. Вăл туберкулҍоз микробĕн уйрăмлăхĕсене тĕпĕлĕн кăтартса пачĕ (Ку микроба халҍ Кох палăчки теççĕ), ăна краскăпа сăрласа пăхас метода ӳкерсе пачĕ, çав микроба уйăрса илсе, ăна микроскоп айĕнче кăтартрĕ. Вăл, çав микроба сывăрăткă çинче ĕрчетмели майсене те кăтартса пачĕ, хăй тупса панă туберкулҍоз палăчкисемпе тинĕс сыснине (морская свинка) тата ытти чĕрчунсене йертсе темиçе опыт туса ăтартрĕ.

Кох ĕçĕсем калама та çук паха. Туберкулҍоза хирĕç кĕрешессипе ытти учонăйсем малашне мĕн тунă, вĕсем пĕтĕмпех Кохăн аслă ĕçĕсем çинче тытăнса тăраççĕ. Анчах Роберт Кохăн ĕçĕсене пирĕн социалисăмлă çĕршывра çеç тивĕçлипе хак панă. Кайзерла Германи аслă нимĕç учонăйне тимсĕр пăхнă. Тата ытларах палăрми пулса йулчĕ унăн йачĕ фашисла Германире. Фашисла правителсемпе „теоретиксем“, ача-пăчасем вилнине тата çитĕннисем чирленине хирĕç кĕрешме кирлĕ мар, тесе каласасси патне çитрĕç. „Айтив вăйсăррисем вилччĕр, вăйлисем пурăнччăр. Ку вăл Германи рассине физически сывлăхларах тăвасси патне илсе пырĕ“,—теççĕ фашиссем. Кун хыççăн ĕнтĕ, пуринчен ытларах ĕç çыннисене тивекен чирĕ кĕрешес облаçра Кох тунă ĕçсене фашиссем хисеп хуманнинчен тĕлĕнмели çук.

Германире влаçа фашиссем тытса илнĕ чи малтан страховани медицинине арката пăрахнине, туберкулҍоз чирĕпе выртакан койкăсене тата туберкулҍозпа кĕрешекен учрежденисене çухаллатнипе паллă пулса тăчĕ. Уйрăмах диспансерсен шучĕ хыттăн кайала чакрĕ—пĕр çулталăкранах вара туберкулҍозпа чирлекенсен йышĕ ӳсе кайрĕ, унпа вилекенсем нумайланчĕç.

Ĕлĕкхи патша правителствине Российăра туберкулҍозпа вилекенсем хăрушла нумай пулни хускатман, çавăн пекех халĕ ку фашиссене те хускатмасть.

Туберкулҍоза хирĕç кĕрешекен учрежденисем патша Российĕнче пулман та пекех: пĕтĕм аслă çĕршыва — туберкулҍозпа чирленисем валҍи пĕр-икĕ амбулатори, 307 чирлĕ çын валҍи... пĕр-икĕ санатори. Анчах çав йумай мар учрежденисем те укçала пулнă, çавăнпа та унта ĕçсыннисем кĕреймен.

Туберкулҍоз—чухăнсен чирĕ. Вăл çынсем тăвăрлăхра, тăсамарлăхра, хĕвелсĕр тата усă сывлăшсăр пурăнакан çĕрте çынсем куллен тăраниччен апат çиеймесĕр пурăннă çĕрте пысăк тупăшсем пухать. Çакăн пек етем тӳсмеле мар условисенче пурăннă патша Российĕнчи ĕçсыннисем, капиталисла çĕршывсенчи ĕçсыннисем çакăн пек условисенче халĕ те пурăнаççĕ. Пуйаннисем ку чирпе сайрарах çеç чирлеççĕ, мĕншĕн тесен туберкулҍоз çациллисене тасă обстановкăра ĕрчеме, сывă организăма çĕнтерме йăвăртарах. Çавăнпа буржуази туберкулҍоза хирĕç кĕрешессине вăйлатма васкамасть те. Буржуази, капиталисла производствăна çитмелĕх кирлĕ ĕç аллисене сыхласа хăварас тата чир епидемилĕ сарăлса кайса пуйан классен представителĕсене те тивме пултарасран сыхлăнас шутпа, туберкулҍоз вăйланнине хирĕç хăйне, буржуазине, тивĕçлĕ таран çеç хăш-пĕр мерăсем йышăнать.

Патша Российĕнче туберкулҍоз рабочи класпа хресченсем нишлĕ пушалă пурнăçпа пурăннин результачĕ пулнă. Социалисăмла Аслă Октабĕр революци пирĕн çĕршывра туберкулҍозăн социаллă тымарĕсене пĕтерчĕ. Совет Сойузĕнче туберкулҍоз иртнĕ ытханлă кунсен йулашкийĕ пулса тăрать. Ăна пирĕн сывлăха сыхлас ĕç анаçлăн пĕтерсе пырать. Пирĕн пысăк хуласенче Мускавпа Ленинградра статистикă кăтартнисем тăрăх 1934 çул тĕлне туберкулҍозпа вилесси, 1913 çултипе танаштарсан, çурри ытла чакнă. Туберкулҍозпа вилесси тата туберкулҍоз чирне пула вăхăтлăха ĕç пултарулăхне çухатасси пирĕн çĕршывра пур çĕрте те чакса пырать.

„ВКП халăх сывлăхне сыхлас облаçра хăй ĕçĕн тĕп никĕсне, пуринчен малтан, сывлăхлатассипе санитарин анлă мерисене, чир-чĕрсем сарăлса кайассинчен сыхланма май паракан ĕçсене, пурнăçа кĕртсе пырассине хурать. Пролетариатăн диктатури сывлăхлатас тата сиплес йенĕпе буржуалă обществăн рамкисенче пурнăçланма пултарайман чылай мероприйатисене пурнăçа кĕртме май пачĕ те ĕнтĕ“, — тесе каланă парти программинче.

Пирĕн парти, совет влаçĕ туберкулҍозпа кĕрешес ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕç. ССР Сойузĕнче халĕ туберкулҍоза хирĕç кĕрешекен учрежденисем — институтсем, санаторисем, диспансерсем, болҍницăсенчи отделенисем, диспансерсемпе поликлиникăсенчи отделенисем, район центăрĕсенче тата халăх нумай пурăнакан вырăнсенче туберкулҍоз йенĕпе ĕçлекен пунктсем 900 ытла шутланаççĕ. Туберкулҍозран сиплес йенĕпе ĕçлекен болҍницăсенче 15 пин койкă ытла, санаторисенче 44 пин койкă, „пулăшу паракан учрежденисем“ текеннисенче 16.000 койкă. Кун çумне шывпа чукун çул транспорчĕсенчи лечебнăй учрежденисенче туберкулҍозпа чирленисем валҍи уйăрнă нумай койкăсене хушмала.

Санаторисем, болҍницăсем, диспансерсем, киле паракан пулăшу ССР Сойузĕнче туберкулҍозпа кĕрешес ĕçре темиçе тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Ĕçе çапла йĕркеленĕ, туберкулҍозпа чирленĕ çын медицинă пулăшăвĕсĕр йулмасть. Кашни чирлĕ çын, врачсем каланă пек, „госпитале койкă йышăнать“, йе ăна туберкулҍоз йенĕпе ĕçлекен санаторине йараççĕ, йе вăл диспансерта учотра тăрса куллен медицинă пулăшăвĕ илсе пырать. Туберкулҍозран сывалса çитнĕ çын хăйне сыватнă учрежденин куçĕ умĕнчен çухалмасть: ăна, çав çынна, куллен сăнаса пыраççĕ, чир çĕнĕрен ан пуçлантăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ, йе тата чир çĕнĕрен пуçлансан ăна вăхăтра тĕпчесе пĕлме тăрăшаççĕ.

Анчах ку пурте мар-ха. Кунта тата предприйатисенчи, предприйатисен сывăхĕнчи диетлă столовăйсене асăнса хăвармала. Вĕсем çăмăл формăлă туберкулҍоз палăрнă çынсен йе туберкулҍоз чирне тӳссе иртернисен начар организăмне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Хăйсем витĕр сезонра темиçе мĕлйун ĕçсынни кăларакан кану çурчĕсем те туберкулҍозран сыхланас çĕрте хăватлă вăй пулса тăраççĕ.

Туберкулҍозпа чирлĕ çын, хăй сывлăхне начарлатакан ĕçре ĕçлет пулсан, вăл çак ĕçе вăхăтра улăштарма пултарать: кун пек чух туберкулҍозпа чирлисене урăх ĕçе куçараççĕ; кирлĕ пулсан, государствă вĕсене урăх квалификаци илме пулăшать.

Партипе совет влаçĕ ача-пăча туберкулҍозĕпе кĕрешес ĕçре те сахал мар çитĕнӳсем турĕç. Туберкулҍоза пĕтерес йенĕпе ĕçлекен ача-пăча санаторийĕсем, ачасем валҍи йатарласа тунă диспансерсемпе поликлиникăсем (вĕсенче 8.000 вырăн), туберкулҍоза хирĕç вакцинăпа сарлакан усă курни, туберкулҍоз пуçланасран сыхланмали тĕрлĕрен профилактикăла мероприйатисем (вăрмантри шкулсем, кăнтăрлахипе каçхи санаторисем, ачасем валҍи диетлă апат-çимĕçсем), ача-пăча туберкулҍозĕне (ӳпке тата шăмă туберкулҍозĕсемпе) кĕрешес формăсене шутласа тухни çеç те кунта çак паха ĕç мĕнле сарлака утăмсемпе пынине кăтартса парать.

Советсен сывлăха сыхлас ĕçĕ, совет науки, партипе правителствă йертсе, çул кăтартса пынипе, Кохăн ĕçне малала йарас тата ĕçсыннисене хăрушă ижекерен — туберкулҍозран хăтарас тĕлĕшпе нумай ĕç турĕç. Епĕр, епĕр çеç — Кохăн чăн-чăн наследникĕсем теçе, хăйулăн та мухтавлăн калама пултаратпăр.

Шота Руставели

Совет Сойузӗнчи халӑхсем „Витязь в тигровой шкуре" йатлӑ героикӑлӑ поемӑна ҫыраканӑн, Грузи халӑхӗн аслӑ поечӗн—Шота Руставелин йубилейне пурте мухтавлӑн паллӑ тӑваҫҫӗ.

Грузи халӑхӗ хӑйӗн генилӗ поечӗн, хӑйӗн тивӗҫлӗ ывӑлӗн йатне, чысне те ӗмӗрсем урлӑ илсе тухрӗ. Ҫав чаплӑ поетӑн биографийӗ ҫырулӑ историне ҫырӑнса йулман. Унӑн пурнӑҫӗ ҫинчен халӑх хушшинчи ӑруран-ӑрӑва куҫса пынӑ халапсем тӑрӑх ҫеҫ пӗлетпӗр.

Халапҫӑсем каласа панӑ тӑрӑх, Шота Руставели Ахалцыхе ҫывӑхӗнчи Руставе йатлӑ йалта ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ вырӑнти феодал пулнӑ. Ӑна ҫамрӑклах хӑйне курайман феодал емел парса вӗлернӗ. Ашшӗ вилнӗ хыҫҫӑн пулас чаплӑ поет хӑйӗн ашшӗн Тбетире монастыр тытса пурӑнакан шӑлнӗ патӗнче пурӑнма пуҫлать. Унта Шота лирикӑлӑ сӑвӑсем ҫырма тытӑнать, часах Месхетире паллӑ ҫын пулса тӑрать. Тбетирен Шота виҫӗ ҫуллӑха Икалтона куҫать. Ҫав вӑхӑтра Руставели ҫинчен Грузи ҫӗршывӗн патши Тамара та пӗлет, ӑна вӑл двореца ӗҫлеме илет. Кайарахпа вара, хӗрарӑм патша—Тамара Шотана малала вӗренме, пуринчен ытла философине вӗренме, Византине йарать. Унтан Шота Месхетине Тамара патшара ларни 14 ҫул (1184—1212) тултарнӑ тӗлеле тавӑрӑнать.

Ҫав вӑхӑтра Шота, унччен паллӑрнӑ поет, нумай художествӑлӑ произведенисемпе историлӗ статйасем ҫырнӑскер, Грузи ҫӗршывӗн историне ҫырма пуҫлать.

Халӑх хушшинче ҫӳрекен халапсем хӗрарӑм патша Тамара хӑйне пиллесе вилӗмсӗр поемӑ ҫырнӑ поета йуратни ҫинчен калаҫҫӗ. Анчах, Шота унӑн йуратӑвне йышӑнман. Хӗрарӑм патша ҫилленет. Мӑнкӑмӑллӑ поета вӗлерсе тавӑрма шутлать. Шота Тамара патшан йунавӗнчен Византине тарса хӑтӑлать. Унта монастырте пытаранса пурӑнать. Легендӑсем Шота Византирен Иерусалиме куҫса, ватӑлса вилнӗ пек кӑтартаҫҫӗ. Халӑх халапӗсем тӑрӑх, Шота Руставели Грузин ҫӗнӗ алфавитне тата пичетлекен станокне шухӑшласа кӑларнӑ пек курӑнать.

Грузи халӑхӗн аслӑ поечӗн легендӑсемпе халапсенчен тӑракан биографийӗ нумай вариантлӑ, анчах вӗсем пӗр-пӗринчен пӗчик уйрӑмлӑхсемпе ҫеҫ уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ. Кашнинчех весенче вилӗмсӗр поемӑн авторне сӑнласа паракан пӗр пек йенсем пур.

Руставели чиркӳн кирек те мӗнле вӗрентӗвне те хирӗҫленӗ. Грузи патшин дворецӗ ҫывӑхӗнче пурӑннӑ чухне Грузири вак феодаллӑ кҌажествӑсем вырӑнне пур тӑшмана та отпор пама пултаракан пӗрлешӳлӗ, вӑйлӑ государствӑ тӑвас шухӑша сарнӑ.

Руставели, Грузи халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ, пурне те тӑван ҫӗршыва чӗререн йуратма, унӑн тӑшманӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма чӗннӗ. Шота Руставели хӑйӗн шухӑшӗсене пысӑк йурату, туслӑх, тӳрӗ кӑмӑлна паттӑрлӑх произведенийӗ пулса тӑракан „Витязь в тигровой шкуре" йатлӑ вилӗмсӗр поэминче калама ҫук уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Йурату поемӑн пӗр геройне, Аравин ҫар начаҫникне — Автандила унӑн йуратнӑ тусӗпе, сар хӗвел пек Тинатинпа ҫыхӑнтарать. Тинатин Автандила тигр тирӗпе витӗнне паллӑ мар витӑҫа шырама йарать. Вӑл витӑҫ—Инди ҫӗршывӗн кӑҫӑ хӑйӗн тусне—Нестан Дареджана ҫухатнӑ Тарийел кӑҫас пулнӑ. Нестана ҫурма-сынсем, ҫурма-асламӑҫсем—каджасем вӑрласа кайса, хӑйсен крепаҫӗнче тыткӑнра усранӑ. Автандилпа Тарийел пӗрлешсе ҫыхӑну тӑваҫҫӗ. Вӗсем патне виҫҫӗмӗш герой — Фридон та хутшӑнать. Вара виҫҫӗшӗ пите вӑйлӑн ҫапӑҫса, Нестан-Дареджана каджӑсен тыткӑнӗнчен хӑтараҫҫӗ. Поемӑ йуратупа туслӑх ҫӗнтернипе вӗҫленет.

Поемӑн геройӗсем—пӗр-пӗрипе туслӑ тупа тунипе ҫыхӑннӑ Автандилпа Тарийел нимрен те хӑрамаҫҫӗ, хӑйсене йаланах паттӑрӑн тытаҫҫӗ. Характӗрӗсем расна пулсан та, вӗсене ҫӗршыв ҫине тӳрӗ кӑмӑлпа пӑхни, ӑна чӗререн йуратни пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Тӑван ҫӗршыва йуратнин хӗрӳлӗ туйӑмӗ Автандилӑн хӑйӗн ҫынӗсем патне йанӑ ҫырӑвӗнче те лайӑх палӑрать. Тигр тирӗпе витӗнсе ҫӳрекен паллӑ мар витӑҫа шырама кайнӑ чухне Автандил вӗсене ҫаплала каласа хӑварать: „Епӗ инҫе кайатӑп. Йут ҫӗршывра пӗр ҫулталлӑк пулмалӑ манӑн. Епӗ сире чӗререн тархаслатӑп: тӑшмансем ҫӗмӗрсе тӑкман тӑван ҫӗршыва ҫӗнӗрен тӗрӗс-тӗкел курма май парӑр. Епӗ хамӑн вырӑна Шармандина хӑваратӑп. Ман ҫинчен хыпар иличчен, вӑл пуҫлӑх пулнӑ чухне те розӑсем чечекленчӗр. Сийенлисене вӑл ӑвӑс пек ҫунтарӗ вут ҫинче".

Кашни хӑй тӗллӗн паттӑр, чӑрсӑр пулни—Шота Руставели хӑйӗн поеминче кӑтартнӑ геройсене илемлетсе тӑраҫҫӗ. Руставели чи маллтан суйалӑха, икӗ чунланнине, хӗрӳсӗрлӗхе, икӗпигленнине йуратмасть. Ку кӑмӑл—поемӑн пуҫламӗшӗнчен мӗн вӗсне ҫитиччченех ҫаплала сӑнланса пырать.

„Улталакан, суйакан ҫынна ылханатӑп. Хӑйӗн тӑшман шухӑшӗсене пытарса, санпа туслӑ пек пулма тӑрӑшакан ҫын уҫӑ тӑшмантан темиҫе хут хӑрушӑрах",—тет Руставели тепӗр ҫӗрте. Шота Руставели ҫӗршыв пирки ҫынна йаланах тӳрӗ кӑмӑллӑ, ӑнлӑхлӑ пулма тата ӑна чӗререн йуратма хушать. Руставелин тӗп шухӑшӗсем,—ҫӗршыва пӗр иккӗленмесӗр йуратасси, халӑх савнӑҫӗ, йуратупа туслӑх,—феодаллӑ тапхӑрта та, капиталиӑсм вӑхӑтӗнче те пурнӑҫланма пултарайман. Ҫынна ҫын експлоатацилессине пӗтернӗ Совет Сойузӗнче, аслӑ Сталин ӑста йертсе пынипе, социалисӑмла обшчествӑ туни ҫеҫ туслӑха, йуратува тӳрӗлӗхе паттӑрлӑха чечекленме май пачӗ.

Вилӗмсӗр „Витязь в тигровой шкуре" поемӑна ҫырнӑранпа ҫичӗ ӗмӗр ҫурӑ иртрӗ. Грузи халӑхӗ хӑйӗн генилӗ йурӑҫин произведенине типтерлӗн упраса пурӑннӑ, тулти пусмӑрҫӑсемпе шалти експлоататорсен ҫӗршер ҫул хушши пынӑ пусмӑрӗ урлӑ илсе тухнӑ ӑна. Грузи хресченӗсем Руставели поемине пӑхмасӑр калама пӗлеҫҫӗ. Хӗр качча тухнӑ чухне тупрапа пӗрле ҫав чаплӑ поемӑна парас йӑла та пулнӑ. Грузи фоҌклорӗ Руставелине тата унӑн поемине халӑх чӗререн йуратнине лайӑх кӑтартать.

Слово твое мы храним и лелеем
с любовью,
Слово, что вновь облекается
плотью и кровью,
Мыслей и чувств наших стал ты,
поэт, властелином,
Слово твое мы несем по горам
и долинам,
Слово твое мы поем водопадам
и рекам,
Шота великий — прославленный
веком.

Аслӑ социализмла революци Совет Сойузӗнче пурӑнакан халӑхсен туслӑ ҫемйине кӗрекен пур халӑхсен культурине пӗр вӗҫӗмсӗр чечеклеме пынине тӑва пачӗ.

Руставелин 750 ҫул кайала ҫырнӑ поеми тӗрӗссипе вилӗмсӗр, тӗнче культурин пуйанлӑхне кӗнӗ произведенийӗн шутӗнче тӑрать. Пирӗн ҫӗршывра ҫав генилӗ поема пур кӗтессене те саланать.

Вӑл, поези йӗткерлӗхӗнчи хаклӑ ахах, аслӑ сталинла тапхӑрта пирӗн аслӑ ҫӗршывра пурӑнакан халӑхсен литературине илемлетсе тӑракан произведени пулса тӑчӗ. (ТАСС).

Массӑран уйӑрӑлса кайнӑ йалсовет

Акат Туҫа (Патӑрйел р.) йалсовечӗ хӑйӗн ӗҫӗнче пӗтӗмӗшпех массӑран уйӑрӑлса кайнӑ. Кӑна ак ҫакӑн пек фактсенчен лайӑх курма пулать. 1937 ҫулта, 11 уйӑх хушшинче мӗн пурӗ те 2 хутчен ҫеҫ граждансен пуххи туса иртернӗ. Йалсовет членӗсене пухса пӗр пленум та туса иртермен. Йулашки 4 уйӑх хушшинче йалсовет президиумӗн ларӑвне пӗрре те пустарман. Йалсовет сумӗнче 11 секци шутланса тӑрать, анчах вӗсем хут ҫинче ҫеҫ шутланаҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗсене чӗртсе йарас тӗлӗшпе нимӗнле руководство та ҫук.

Суйлавҫӑсем парса хӑварнӑ наказ ҫинчен йалсовет манӑ, унӑн пӗр пунктине те пурнӑҫламан. Шкулсем пайанхи куна та вутӑсӑр лараҫҫӗ, вулав ҫурчӗ валҌи уйрӑм ҫурт тупса памаҫҫӗ, хут пӗлменнисене тата сахал пӗлекенсене вӗрентес тӗлӗшпе те нимӗн те тумаҫҫӗ, а вӗсен хисепӗ 43 ҫын.

Йалсовет председателӗ Немцев кукӗн-ҫӗрӗн ӗҫкӗпе аташса ҫӳрет. Йалти активпа тачӑн пӗрлешсе ӗҫлес вырӑнне, йалти хулигансемпе пӗрлешсе ӗҫсе ҫӳрет.

Мӗнле тӳссе тӑма пултарнӑ-ши ҫаксене Патӑрйел райӗҫтӑвкомӗ? Тӗлӗнмелли нимӗнех те ҫук. Райӗҫтӑвком председателӗ пулнӑ Степановӑн ҫавӑн пек ӗҫекенсемпе растратчиксем ҫывӑх йулташӗсем пулса тӑнӑ, вӑл вӗсене хӳтӗлене, ӗҫке йерсе кайма вӗсене хӑй мер хавхалантарса пынӑ.

Ф. Рум.

6 килограмлӑ шӑл

ТРАК. Типҫырма йалсоветӗнчи „Трудовик" колхоз членӗ, 70 ҫулхи Иван Йефремов, хӑйӑр илекен шӑтӑкран 6 килограм тайакан шӑл, ҫав вырӑнтанах тата Т. Филиппов колхозник пӗр метр вӑрӑмӑш пуслӑх хулӑмӗш патрчи шӑмми тупнӑ. Колхозниксем ҫавсене малашне шӑммисем пулӗ тесе шутлаҫҫӗ.

Ватӑ ҫынсем калани тӑрӑх, ӗлӗк ҫав вырӑнта вӑрман пулнӑ, унта тискер кайӑксем те пурӑннӑ. Ҫак тарӑн типӗ ҫырмаран хӑйӑр кӑларнӑ чух ытти пысӑк авалхи йӑлӑрсем те тухаҫҫӗ.

Арх. Краснов.

Комсомол организацисенче боҌшевикла йӗркелӗх кирлӗ

(Редакцине килнӗ ҫырусем тӑрӑх)

Партинӗ ӳсме кирлӗ пысӑк резервсенчен пӗри ленинла комсомол. Ленинла комсомолӑн тӗп задачӗ ӗҫҫамрӑкӗсене политикӑла воспитани парасси, вӗсене Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, социалисӑм ӗҫӗшӗн, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ вӑйлӑн кӗрешекен туса ҫитентерессi пулать. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме комсомол организацисенче ҫирӗп йӗркелӗх, дисциплинӑ, организацилӗх кирлӗ. Комсомол ӑшӗнчи халӑх тӑшманӗсене нимӗч йулмиччен тӑпӑлтарса пӗтермеле. Комсомолецсене, ӗҫҫамрӑкӗсене парти тавра тата тачӑрах пӗрлештермеле.

Анчах та чылай районсенчи пуҫламӗш организацинче комсомола тивӗҫлӗ йӗркелӗх, дисциплинӑ ҫук. Комсомол организацисенче тӑшмансем туса хӑварнӑ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерессишӗн ҫине тӑрса боҌшевикла хайарлӑхпа кӗрешни ҫук. Комсомолецсене политикӑла воспитани парас ӗҫе халӗ те чылай организацисенче ҫине тӑрса тытӑнман. Ҫакна редакцине комсомол организацисенчи ҫитменлӗхсем ҫинчен килекен нумай заметкӑсем кӑтартса параҫҫӗ.

— Шӑхасан районӗнчи Киров йачӗпе тӑракан колхозра 5 комсомолец,—тесе ҫырать Гаврил Исайев йулташ.—Анчах ку организацире нимӗнле йӗркелӗх те, дисциплинӑ та ҫук. Комсомол организацинче 4 уйӑх хушшинче те пӗр пуху пулман. Политкружоксем ҫук. Комсорг **Денисов** йулташ нимӗн те туман. Вӑл комсомолецсенчен, колхоз ҫамрӑкӗсенчен уйӑрӑлса кайнӑ. Комсомола илме панӑ зайавленисем 3-шер уйӑх выртаҫҫӗ. **Николайӗв** комсомолец комсомол билетне ҫухатнӑ. Йалта **Романов, Йакимов, Архипов** коммунисcем пур, анчах вӗсем комсомол организацине нимӗн те пулӑшмаҫҫӗ.

Комсомол организацисенче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ сӳнсе ларнине, райкомолсем пуҫламӑш организацисене пулӑшманнине, кирлӗ пек йертсе пыманнине Иванов йулташ ҫырӑвӗ лайӑх кӑтартса парать. Вӑл ҫапла ҫырать:

„Комсомолецсене, ӗҫҫамрӑкӗсене политикӑла воспитани парасси Йелчӗк районӗнче питӗ начар тӑрать. Райӗҫтӑвком сумӗнчи комсомол комитечӗн политкружоксем ҫук. Патрикелри, Ӗнелри организацисенче политкулсем ӗҫлемеҫҫӗ. Политкулсен руководителӗсене райкомолӑн тупса памала. Анчах райкомол ку тӗлӗшпе нимӗн те тумасть".

Комсомолецсен пухувӗсем йӗркелӗ пулманни, политкулсен ӗҫӗсем начарри, билетсене ҫухатнисем, комсомола кӗме панӑ ӗҫҫамрӑкӗсен зайавленисем 3-шер уйӑх выртни—ҫаксем пурте комсомол организацисене райкомолсем начар йертсе пыни, парти руководстви ҫителӗксӗрри ҫинчен калаҫҫӗ. **Шӑхасан** районӗнчи **„Прожектор" колхозри комсомол организаци** ӳсмест, мӗншӗн тесен комсомолецсем колхоз ҫамрӑкӗсем, уйрӑмах хӗрсем хушшинче нимӗн те ӗҫлемеҫҫӗ, тесе ӳпкелесе ҫырать **Шаков** йулташ.

Кунта илсе кӑтартнӑ ҫырусем пӗччен-шерӗн мар вӗсем. Унашкал ҫырусем редакцине нумай килеҫҫӗ.

Йулашкинчен, ку питӗ пысӑк ӗҫ, комсомола парти йенчен йертсе пырасси. Ку ӗҫ чылай ҫӗрте питӗ начар тӑрать. Парторганизацисем тата вӗсем комсомол ҫумне ҫирӗплетнӗ коммунисcем час-часах комсомол организацисене куллен йертсе пыма ӳкирлине манаҫҫӗ. Ҫакна пула коммунисcен кӳҫ умӗнчех комсомол организацисем саланса кайас патне ҫитеҫҫӗ. Конкретлӑрах каласан, ҫакӑ пулать те ӗнтӗ, комсомол организаци ҫине алла сулса, пӳрне витӗр пӑхни.

Халӗ партине илес ыйту парти ӗҫӗнчи чи ответлӑ участкӑ. Комсомол партине илмели пысӑк резерв. Ҫакна кашни парторганизацин, райкомолӑн асра тытмала та комсомола йертсе пырас ӗҫе вӑйлатмала. Хуҫасӑр организацисем пулмала мар. Ҫамрӑксене политикӑла воспитани парассине вӑйлатни чӗрӗ организамлӑ боҌшевиксен парти ретне ҫӗнӗ вӑйсемпе тултармали лайӑх май. Ку вӑл кашни комсомолецӑн аслӑ, ӗмӗтне—боҌшевиксен парти ретне кӗрес ӗмӗте пурнӑҫа кӗртме май парать.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен те, комсомол организацисенче пулса пыракан ҫитменлӗхсем ҫине айаккӑн пӑхмала мар. Кашни ҫитменлӗхӗн сӑлтавне тупмала, унтан тивӗҫлӗ вывӑд тумала, йертсе пырас ӗҫе лайӑхлатмала.

Р. Шашков.

Йамаш шкулӗнче

Шӑхасан районӗнчи Йамаш шкулӗнче 450 ача вӗренет. Шкул иртнӗ ҫулсемпе танаштарсан, хӑйӗн ӗҫне чылай аван йӗркеленӗ.

Шкулта класпа клас ӑмӑртса вӗренеҫҫӗ. 7-мӗш „А" класпа (руководителӗ Захаров йулташ) 7-мӗш „В" клас (руководителӗ Никитин йулташ) хушшинчи социалисӑмла ӑмӑрту договорӗ мӗнле пурнӑҫланса пынине тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, 7-мӗш „В" клас малта пыни курӑнчӗ.

Ку класри ачасем кашнийех вӗренӳре „хорошо" паллӑран кайа мар илессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса вӗренеҫҫӗ. Класра М. Скворцова, А. Кузнецов, Р. Константинова вӗренекенсем пур предметсемпе те „отлично" паллӑсем илсе пыраҫҫӗ. Ытти ачасем вӗсенчен пример илеҫҫӗ. Отличниксем кайа йулакансене пулӑшаҫҫӗ.

Отлично вӗренесси ахаҌ пулмасть. Кунта ҫине тӑрса ӗҫлени кирлӗ. 7-мӗш „В" класри отличниксем урокра учител каланисене тимлӗн итлесе лараҫҫӗ, ӑнланман ыйтусем пирки ҫавӑнтах ыйтса пӗлеҫҫӗ, киле парса йанӑ уроксене тӗплӗн, лайӑх хатӗрлесе килеҫҫӗ, ытларах хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеҫҫӗ. Урока ӑнланасси чӗлхене пӗлнинчен килет. Отличниксем чӗлхене (вырӑсӑнне те, чӑвашӑнне те) лайӑх ӑнланса вӗренес тесе, шкул библиотекинчен илемлӗ литературӑ илсе нумай вулаҫҫӗ.

Учителсем те кӑҫал уроксене лайӑхрах хатӗрленсе пыма пуҫларӗҫ. Анчах ӑмӑртура 7-мӗш „А" клас йулса пыни, клас руководителӗ Захаров йулташ уроксене хатӗрленмесӗр пынинчен те нумай килет. Захаров хӑйне мӑнна хурать. Ачасемпе йӗркелӗн калаҫмасть. 7-мӗш „А" класра дисциплинӑ йапӑхрах.

Йамаш шкулӗнче вӗренекенсен кану вӑхӑтне йӗркелес тӗлӗшпе кӑҫал ҫӗнӗ ӗҫсем тунӑ. Шкулӑн радио пур. Переменӑсенче ачасем репродуктор умне пухӑнса радио итлеҫҫӗ.

Вӗренекенсене валҌи шкул 15-мӑшӑр йелтӗр илнӗ. Ачасем хӑйсем те йелтӗрсем тӑваҫҫӗ. Йелтӗрпе ачасем кану кунӗсенче, переменӑсенче йарӑнаҫҫӗ.

Кашни класра стена хаҫачӗ тухнисӗр пуҫне, пӗтӗм шкулӗпе „Пионер" йатлӑ хаҫат тухса тӑрать. Анчах икӗ ернере пӗрре тухаканскер, вӑл шкулӑн пурнӑҫне тӗплӗн ҫутатса пыраймасть.

Шкулта пионерсен отрйачӗсем—4. Анчах вӗсене аслӑ вожатый Харитонов йулташ кирлӗ пек йӗркелесе пыраймасть. Ҫавнашкалах шкулти пултарулӑх кружокӗсем те начартарах ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫне чӗртсе йарсан, шкулти пурнӑҫ тата хаваслӑрах пулнӑ пулӗччӗ.

Ал. Иванов.

Ыран пурте пулӗ...

ЙӖПРЕҪ. „Кооплеспром" аласталӑх ертелӗнчи стружкӑ тӑвакан тата хӑма ҫуракан цехсенче ӗҫлекен рабочисем ҫӗнӗ ҫула ӳсӗмсемпе кӗтсе илессишӗн социалисӑмла ӑмӑртӑва вӑйлатсах пыраҫҫӗ. Ӑмӑртура стахановецсем пример кӑтартаҫҫӗ. Акӑ стружка цехӗнчи пӗрремӗш номӗрлӗ станок ҫинче ӗҫлекен Анна Йефремова хӑйӗн ҫулталӑкри стружкӑ туса кӑларас плана тултарнӑ хыҫҫӑн тата та хӗрӳлӗн ӗҫлеме пуҫларӗ. Кашни кун 662 килограм стружкӑ кӑларас вырӑнне, вӑл 800—850 килограм кӑларать.

Анна Йефремовапа ӑмӑртса ӗҫлекен Шибалова йулташ малти рете тухрӗ. Вӑл виҫҫӗмӗш номӗрлӗ станок ҫинче ӗҫлет. Ку станок иртнӗ вӑхӑтсенче начар ӗҫленӗ. Мӗншӗн тесен йаланах йусавсӑр пулнӑ. Шибалова йулташ ӗҫлеме пуҫласан ӗҫ ӑнаҫлӑн кайнӑ. Чӑнах та Шибалова йулташ та пирвайхи вӑхӑтсенчех хӑйӗн нормине ӑнаҫлӑн тултарса пырайман. Халӗ вӑл кашни кунхи нормӑна 110 процент тултарса пырать.

— Йефремовӑран йулмастӑп. Ҫӗнӗ ҫула Йефремова пек ӗҫлеме тытӑннипе кӗтсе илетӗп,—тет Шибалова йулташ.

Заводра ҫитменлӗхсем те пур-ха. Вӑл ҫитменлӗхсем стахановла йухӑма хӑвӑрттӑн вӑйлатса пырассине чӑрмантараҫҫӗ. Пӗр ҫитменлӗх вӑл—заводри пур станоксем те ӗҫлеменни. Стружкӑ цехӗнчи виҫӗ станокран иккӗшӗ ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Пӗри чӗн ҫуккипе ӗҫлемест. Икӗ станокӗ ременсем ҫук пирки тӑватӑ ҫӗҫӗпе ӗҫлес вырӑнне икшер ҫӗҫӗпе кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Анчах ертел руководстви чӗнсем тупса парассишӗн васкамасть.

— Пирӗн ертел правленийӗ завод ҫине ытла та ҫийелтен пӑхать. Чӗнсем йапӑхса кайни ҫинчен темиҫе хут та каланӑ ӗнтӗ. Анчах „ыран пурте пулӗ" тенипех вӑхӑта вӑрӑма чӑсаҫҫӗ. Станоксем тваташар ҫӗҫӗпе ӗҫлес пулсан, епӗ стружка туса кӑларассине икӗ хут ӳстерме пултаратӑп,—тет стахановка Анна Йефремова.

Хӑма ҫуракан цех тата та йапӑх ӗҫлет. Кашни сменӑра 27 кубла метр хӑма ҫурас вырӑнне 15—17 кубла метр ҫеҫ ҫурать. Кунашкал пулни чӗрӗ таварсем ҫителӗклӗн тӑратманнинчен килет. Чӗрӗ таварсем кирлӗ таран тӑратма ертелӗн пур кирлӗ условисемпе майсем те ҫителӗклӗ. Анчах ҫине тӑрса тимлӗн ӗҫлеменни чӑрмантарать кунта.

Дм. Михайлов.

Колхозсенче самокритикӑна анлӑн сармала

Сталинла йалхуҫалӑх ертел уставӗ тӑрӑх ӗҫлесе пырса, устав йышӑннӑранпа нумайӗш колхозсем организаципе хуҫалӑх йенчен ҫирӗпленчӗҫ, малта пыракан колхозсем пулса тӑчӗҫ.

Йалхуҫалӑх ертелӗн уставӗ колхозсен тӗп саккунӗ, ӑна пӑсма никама та права паман. Устава пӑсакан вӑл государствӑ саккунне пӑсакан пулать. Кун ҫинчен Сталинла Конституцин 131-ш статйи: „ССР Сойузӗн кашни гражданинӗ обшчествӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑха,—совет йӗркинчи таса, никам тӗкӗнмеле мар, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыв пуйанлӑхӗпе хӑвачӗн ҫӑлкуҫӗ, мӗн пур ӗҫҫыннисен ҫӑлкуҫӗ пулса тӑракан харпӑрлӑха,—упраса ҫирӗплетсе пыма тивӗҫ.

Обшчествӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑха тӗкӗнекен етемсем халӑх тӑшманӗсем пулса тӑраҫҫӗ", тенӗ.

Апла пулин те ҫак саккуна хӑшпӗр колхозсенчи пуҫлӑхсем пӑхӑнмаҫҫӗ-ха. Вӗсем колхозниксем каланине тата колхозниксен аслӑ пухувӗ йышӑннисене пӑхӑнмасӑр хӑйсем хуҫа пулса, мӗн тӑвас тенӗ ҫавна тӑваҫҫӗ.

Акӑ Платкари „Хӗрлӗ йалав" (Шупашкар р.) колхоз председателӗ П. Данилов колхоз хуҫалӑхне вӑрттӑн ҫаратакансене хӑйӗн тавра йавӑҫтарса колхоза ҫаратма тытӑннӑ. Вӑл колхоз укҫине 1 пин тенкӗ хӑйӗн кӑсйине чикнӗ. Ҫавнашкалах Кириллов кладовщикпа пӗр шухӑшлӑ пулса колхоз тырпулине 4 тонна йахӑн колхозниксенчен вӑрттӑн пытарса йулнӑ. Даниловӑн сысна фермин пуҫлӑхӗнче ӗҫленӗ вӑхӑтра сыснасене тӑрантарма панӑ тырра вӑрланипе 163 пуҫ сыснаран 69 пуҫне выҫӑхтарса вӗлернӗ. Даниловӑн пиччӗшӗ лашасене тӑрантарма панӑ тырра сахал мар вӑрланӑ. Ҫак сӑтӑрҫӑсен ӗҫне ревизи комиҫҫийӗ лайӑх пӗлнӗ пулин те, нимӗн те шарламан.

Ҫавнашкалах Трак районӗнчи Хозакассинчи „Пйатилетка" колхозра клас тӑшманӗсем хӑйсене валҌи ӑшӑ йӑва ҫавӑрса, колхозра сӑтӑрла ӗҫсем туса пурӑннӑ. Камсем пулнӑ-ха „Пйатилетка" колхоз правленинчи пуҫлӑхсем?

Колхоз председателӗ Чеботарев М. ӗнепе услам туса, ҫӗр тара илсе пуйса пурӑннӑ кулак ывӑлӗ. Чеботарев колхоз председателӗнче ӗҫлеме пуҫланӑранпа колхозниксен массине партипе правителствӑ ҫул йӗрӗнчен айаккала пӑрса йама тӑрӑшнӑ.

Колхоз председателӗн заместителӗ Г. Софронов Чеботаревӑн пиччӗш ывӑлӗ. Софроновпа колхоз счетоводӗ Захаров хӑйсен ӗҫӗпе Ҫӗрпӳ пасарне кайсан Хӗрлӗ Ҫарӑн фондӗнче шутланса тӑракан „Барчук" йатлӑ лашана ҫухатса тавӑрннӑ. Колхозниксен аслӑ пухувӗ тата ревизи комиҫҫи Софроновпа Захарова суда парса лаша хакне шыраса илмеле, тесе йышӑннӑ. Анчах Чеботарев ҫак ӗҫе суда памасӑр хӳтлесе пурӑннӑ.

Кам пулнӑ-ха Захаров? Ӑна Чеботарев мӗншӗн хӳтлет? Вӑл тирпе услам туса пурӑннӑ кулак ывӑлӗ. 1930 ҫулта саса прависӗр хӑварнӑскер, Чеботаревӑн кӗрӳшӗ.

Кӑҫал колхозниксем Вӑрнар леспромхозӗнче вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫленӗшӗн илмелли, сӗлке завхоз Петров илсе сутса укҫине хӑйӗн кӑсйине чикет. Вӑлах колхоз ҫумӗнчи ОАХ пуҫламӗш организацин пурлӑхне ҫаратса салатса йанӑ. Уборка вӑхӑтӗнче машинӑн кирлӗ „пайӗсене вӑхӑтра илсе килмесӗр чӑрмантарса пынӑ. Колхозра виҫӗ бригадӑ бригадирӗсем те: Кириллов, Матвейев, Федоров виҫҫӗшӗ те колхоз пурлӑхне ҫаратнӑшӑн судпа айӑпланнӑскерсем. 1936 ҫулта клевер арпи тата 500 пӑт ҫӗрулми ҫӗртсе йанӑ. Чеботаревсем ҫак ҫӗрӗкпе сыснасене тӑрантарнӑ. Ҫапла вара 95 пуҫ сыснаран 70 пуҫ вилнӗ. Кӑҫал та 200 пӑт ытла ҫӗрулмине уйрах шӑнтса йанӑ. Колхозра учотпа отчот ӗҫне пӗтӗмпех йапӑхтарса йанӑ. Кунта критикӑпа самокритикӑна пачах хӗстересе лартнӑ. Ҫавӑнпа та, ҫак сӑтӑрҫӑсем колхоза ҫаратса пурӑннӑ.

Йункӑри „Войков" колхозра та (Тутаркас р.) пуҫлӑхсем сахал мар киревсӗр ӗҫсем тунӑ. Вӗсен киревсӗр ӗҫӗсене районри пуҫлӑхсем лайӑх пӗлнӗ пулин те, киревсӗр ӗҫ тӑвакансене тӑрӑ шыв ҫине кӑлармa шутламан. Вӗсене хӳтлес ӗҫре ПСК(б) Парти райкомӗн секретарӗ пулнӑ халӑх тӑшманӗ Иванов тата троцкиспа ҫыхӑнуа тытса пурӑннӑ Марков прокурор малти ретре тӑнӑ.

Кун пек колхоз хуҫалӑхӗнче сӑтӑрлӑ ӗҫ тӑвакансем ҫинчен „Чӑваш Коммунӗ" хаҫат редакцине кашни кун тенӗ пекех ҫырусем килсе тӑраҫҫӗ. Районри ҫӗрӗҫ пайӗсем колхоз хуҫалӑхӗнчи сӑтӑрҫӑсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тӗлӗшпе интересленмеҫҫӗ.

Колхозра учотпа отчот ӗҫне, ҫитменлӗхсене, йалхуҫалӑх ертелӗн уставне мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине тӗрӗслесе пырасси ҫӗрӗҫ пайӗн ӗҫӗ пулмала. Апла пулин те, ҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсем колхозниксен жалӑбисене вӑхӑтра пӑхса тухас ӗҫе татса парасси ҫине бюрократла пӑхаҫҫӗ.

Н Михейев.

Государствӑ умӗнчи обйазателствӑсене вӑхӑтра тултармала

Государствӑ умӗнчи пӗтӗм парӑмсене те вӑхӑтра парса татасси кашни ӗҫҫыннинех хисеплӗ тата тивӗҫлӗ ӗҫӗ пулса тӑрать. Ҫапла пулсан та, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче ҫак хисеплӗ те кирлӗ ӗҫе пурнӑҫлассипе районри Уполкомзаг кантурӗнче ӗҫлекенсем ҫителӗклӗн ӗҫлемеҫҫӗ. Районра декабӗрӗн 20-мӗшне 1937 ҫулхи ашкакай хатӗрлев планне 78,4 процент кӑна тултарнӑ. ШуҌгино йалсоветӗнчи колхозниксем 66 проц., Карабаш—62, Аксарино—65 процент тултарнипех лӑпланса ларнӑ. Ашкакай хатӗрлевӗ йединоличниксем хушшинче татах та кайа йулса пырать. Водолейевопа Урхас Кушкӑ йалсовечӗсенчи йединоличниксем ҫулталӑкри плана 38-шер процент ҫеҫ тултарнӑ.

Сӗт-ҫу хатӗрлев планне 77,7 проц. тултарнӑ. Сӗт-ҫу хатӗрлевӗпе Аслӑ Ӑстакасси, Йуртакасси, Магаҫ, Аманкино, Сӗнтӗрпуҫ йалсовечӗсем кайа йулса пыраҫҫӗ. Вӗсем ҫулталӑкри плана 56—67 процент анчах тултарнӑ.

Ҫӑм хатӗрлевне декабӗрӗн 20-мӗшне 83,8 процент тултарнӑ. Ҫӑм хатӗрлевӗпе уйрӑмӑнах Кудемер, ШуҌгино, Карабаш, Шурпӑл йалсовечӗсем чӑрмантарса пыраҫҫӗ.

Районри 96 колхозран 38 колхозӗ ҫеҫ кантӑр вӑрри хатӗрлев-планне тултарнӑ. Йурийево колхозӑн кӑҫал государствӑна 136 килограм кантӑр вӑрри памала пулнӑ пулсан, ҫак колхоз пайанхи куна ҫитсе те государствӑна пӗр килограм та парса татман. Ҫакӑн пекех 2-мӗш Чураш, Шӗнерпуҫ, Шӑпчӑккасси, Чермӗш колхозӗсем те парса татман-ха.

Сӳс-кантӑр хатӗрлевӗпе районра Кив Тутайкассинчи „Кунер" колхоз малта пырать. Вӑл декабӗрӗн 20-мӗшне государствӑна сӳс-кантӑр парас плана 189 процент тултарчӗ. Ҫичӗпӳртри колхоз 109 процент тултарчӗ. Ҫакнашкалах Анатри Магаҫ, Йуртакасси, Тутаркасси, Чермӗш колхозӗсем 100 процентпех плана пурнӑҫланӑ. Ҫак вӑхӑтрах хӑшпӗр колхозсенче государствӑна сӳс-кантӑр парса татассипе нимӗн те тумаҫҫӗ. Аслӑ Ӑстакасси колхозӗнче пайанхи куна та кантӑра шывран кӑларса типӗтсе тылласа сӳс туман. Ҫакӑн пирки те Аслӑ Ӑстакасси колхозӗ ҫулталӑкри плана 3 процент, Кудемер йалсовечӗ—20 процент, Арзаматово колхозӗ—18 проц., Наратчакки колхозӗ—14 процент, Шупка колхозӗ—30 проц., Хуракасси колхозӗ—20 процент тултарнипе чарӑнса ларнӑ.

Районра хатӗрлев планӗсене тултарасси кайа йулса пыни мӗнрен килнине пӗлес шутпа пирӗн Уполкомзагра ӗҫлекен Чернов патне пыма пулчӗ. Епӗр Черновран:

— Государствӑ умӗнчи парӑмсене тултарассипе район мӗншӗн ҫав тери кайа йулса пырать?—тесе ыйтсан, Чернов пире:

— ХаҌ те ырми-канми ӗҫлетпӗр, плана тултарассишӗн кашни кун йалсоветсене отношенисем йаратпӑр, анчах йалсовечӗсем ҫителӗклӗ ӗҫлемесен пирӗн мӗн тӑвас-ха,—тесе ответлерӗ.

Уполкомзагӑн ӗҫре алсене усса ларни нимӗ йурӑхсӑр йапала. Ҫӗнӗ ҫул ҫитесси нумай йулмарӗ. Ҫак кӗске хушӑрах государствӑ умӗнчи обйазателствӑсене тултармала.

Трахомран сываласҫӗ

1935 ҫулта диспансеризаци тунӑ вӑхӑтра Сӗнтӗрвӑрри районӗнче трахомлисем 7843 ҫын пулнӑ. Кӑҫалхи ҫул нойбӗрӗн 1-мӗшӗнче тепӗр хут тӗплӗн шута илнӗ хыҫҫӑн, районра ҫав шутран 2816 ҫын трахомран йӑлтах сывалса ҫитни курӑнчӗ. Уйрӑмӑн илсен, 1-мӗш стадилӗ трахомпа чирленисенчен—64 процент, 2-мӗш стадилисенчен—50 процент, 3-мӗш стадилисенчен—10 процент сывалнӑ.

Магаҫ йалсоветӗнче диспансеризаци вӑхӑтӗнче трахомпа чирленисем 255 ҫын пулнӑ. Кунта, Семенова трахсестра тӑрӑшса ӗҫленипе, трахомран 100 ҫынна сыватнӑ. Шуркасси йалсоветӗнче 159 ҫынран 106 ҫын (трахсестра Йефремова), Шуршӑл йалсоветӗнче 221 ҫынран 117 ҫын (трахсестра Степанова), Ӗсмӗл йалсоветӗнче 184 ҫынран 104 ҫын (трахсестра Иванова), Турханкасси йалсоветӗнче 158 ҫынран 116 ҫын (трахсестра Григорйева) сыватнӑ.

Ҫак усал чире пӗтерес тӗлӗшпе районра 45 трахомпункт ӗҫлет. Вӗсенче кашнинчех трахом работникӗсем пур.

В. Васильев.

Румынири парламент „суйлавĕн“ резулҍтачĕсем

БУХАРЕСТ, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Румынири парламент суйлавĕн тăтăклă итогĕсене ку таранччен те пĕлтерĕсе кăлармаи-ха. Малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, пĕтĕм Румынире сасăланă çĕре 2.700.000 суйлавçă хутшăннă, вăл мĕн пур суйлавçăсенчен 14 процент тата суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 55 процент пулать. Тĕрĕссине илсен, сасăлана çĕре хутшăннă суйлавçăсен хисепĕ тата пĕчĕкрех: мĕншĕн тесен правителствăн либераллă парти членĕсем нумай çĕрте пĕр бюллетен вырăнне виççĕр-ниллĕшер бюллетен илнĕ.

Суйлавсем террор хайарран аскăнна условисенче пулса иртнĕ. Суйлав кунĕнче, декабĕрĕн 20-мĕшĕнче, темиçе çынна вĕлернĕ тата 20 çын ытла амантнă. Парламентра ытларах вырăн йышăнма кирлĕ сасăсенчен 40 процентне илес тĕлĕшпе правителствă мĕн тума пултарнине пурне те тунă. „Карантин“ тесе калакан сăлтавпа чылай районсене сасăлана çĕре хутшăнтармаи. Сасăсенчен 20 процентне „ăн мар“ тесе йышăнна. Çапах та, вăйлă террора ултавсене пăхмасăрах, правителствă партийĕ 40 процент саса пухма пултараймаи. Малтанлăха шутласа тухнă хисепсем тăрăх (тăтăклăн шутласа тухсан кĕсем кăштах улшăнма пултараççĕ), либераллă парти пĕтĕм сасăран 37,5 процент, национал-царанисем—19,4 проц., „Тимĕр гварди“ ятлă фашисла парти—16,09 процент, Гоги-Кузы текен фашисла ушкăн (национал-христианла „парти“) — 9,7 процент, Венгри партийĕ—4,4 процент илнĕ. Ыттисем ытти вĕтĕ партисем хушшинче пайланса пĕтнĕ.

Румынире суйлав результачĕсене правителствăна либераллă парти калама сук пысăк поражени тÿсни пулать, тесе калаççĕ.

Суйлав результачĕсем çĕршыври ĕçсыннисен йышлă массисем правителствă политикине хирĕçленине палăртса тăраççĕ. Тĕрĕссине илсен, правителствăпан нанă сасăсен хисепĕ тем тери пĕчĕккĕ. Правителствă коммюнике пичетлесе кăларнă, унта вăл 1938 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче пулма палăртнă парламент уçăличченех влаç патĕнче йулать, тесе пĕлтернĕ. Çав коммюнике мĕн пур оппозициллĕ партисене хытă тарăхтарса панă, вĕсем Татареску правителствине халех отставкăна тухма ыйтаççĕ. Национал-царанисла парти социал-демократла партипе пĕрле правителствăна, „саккунлă мар, парламентлă мар, конституцилĕ мар правителствăна“ сирĕтсе антарас тĕлĕшпе вăйлă кампани çĕкса ырать. Националисла парти йанварĕн пĕрремĕш числисенче Татареску правителствине сирĕтсе антарма ыйтса пĕтĕм çĕршыв тăрăх нумай йышлă пухусем туса иртерме палăртнă.

Пулас правителствăн составĕнче кам-кам пулассн халҍ пимĕн те паллă мар-ха. Парламент уçăлаччеххи вăхăтра, 1938 çулхи февралĕн 17-мĕшĕн, либералсем фашисла партисемпе парламент блокĕ тăвасси çинчен каласса тăтăлаççĕ пулмала. Çав тĕлĕшпе халех ĕнтĕ Гоги-Кузы текен фашисла ушкăнпа (национал-христианла партипе) каласусем пыраççĕ. Парламентла партисем çине тайанса тăракан правителствă тăвас ĕç ăнăçлă пулмасан, парламента октябĕрĕн 15-мĕшĕн салатса йараççĕ. Çĕршыв управленийĕ „декретсем“ пулăшнипе пулса пымала.

Хĕллехи кĕвĕ

(ача-пăча сăвви)

Сăвви В. Услин — Музыкĕ А. Тогаевăн

1. Вĕл-тĕр — вĕл-тĕр йур çу-са шу-ра-тат ху-ра çĕ-ре. Е-пĕр йу-рă йур-ла-са ха-тĕр-ле-ет пĕр йĕл-тĕ-ре. Çу-тăр, çу-тăр шу-рă йур, çĕр-шы-ва шу-рат-тă-рах! Пи-рĕн çу-наш-ка та пур кĕç йар-нат-пăр ту тă-рăх.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр йур çуса
Шуратать хура çĕре.
Епĕр йурă йурласа
Хатĕрлетпĕр йĕлтĕре.
Çутăр, çутăр шурă йур,
Çĕршыва шураттăрах;
Пирĕн çунашка та пур,
Кĕç йарнатпăр ту тăрăх.

Çил турткалĕ тумтире,
Хыттăн шăхăрĕ: ши-ши!
Нимĕскер те мар пире
Хĕл сиввийĕ тулашни.
Çил çÿретĕр уласа,
Кашкăрла улатăрах;
Епĕр йурă йурласа
Йарăнатпăр ту тăрăх.

Мускаври стахановецсем чĕнсе каланине болҍшевикла ответ

Мускаври стахановецсем чĕнсе каланине колхозсемпе машинă-тракторлă станцисенче черрĕн йышăннă.

Харьков облаçĕнчи Красноградск машинă-тракторлă мастерскойĕн коллективĕ стахановла ĕçĕн сталинла уйăхне пĕр шухăшлăн хутшăннă. Рабочисем виççĕмĕш пиатилеткăн пĕррремĕш уйăхне тивĕçлĕн кĕтсе илес тесе йанварĕн 1-мĕшчен 32 трактор моторĕ йусама, февралĕн 10-мĕшчен мĕн пур тракторсене йусаса пĕтерме йышăннă. Нумайĕш стахановецсем пĕр кунхи нормăна 250 процент тултараççĕ.

Краснодар крайĕнчи Красноармейски машинă-тракторлă станцийĕнче стахановец тимрĕç Тачалов йулташ Мускаври стахановецсем чĕнсе каланине ответлесе нормăна 250 процент тултарать. Уппа ăмăртакан Назаров тимрĕç хăйĕн ĕçне 150 процент тăран тултарма пуçланă. Хăйсен ĕçĕсене ытти рабочисем те вăйлăн ÿстерне.

Одесса облаçĕнче тракториссемпе комбайнерсен сиесĕ уçăлнă, унта социалисăмла уйхир маçтăрĕсем 570 çын пулнă. Сиес йанварĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче тракторсем йусамали стахановла вунăкунлăх ирттерме йышăннă.

(ТАСС).

Горькийри Молотов йачĕпе тăракан автозаводăн 300.000-мĕш автомобилĕ

ГОРЬКИЙ, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Молотов йачĕпе тăракан автозаводăн тĕп сборочнăй конвейерĕнчен 300.000-мĕш грузовике тухнă. Çак чаплă ĕçпе рабочисен тата инженерла техникăла работниксен коллективĕ Горькири Молотов йачĕпе тăракан автозавод 6 çул тултарнине кĕтсе илет.

Ултă çул кайала—1932 çулхи йанварĕн пĕрремĕшĕнче автозавода хута йана, унтан 25 кунран тĕп конвейертан пĕрремĕш автомашинăсем тухнă. Завод хăй хута кайсан пĕрремĕш çулта 7.524 автомобил туса кăларнă, кăçал çĕршыва 100 пин машинă парать.

Партине кĕме зайавленисем параççĕ

МУРМАНСК, декабĕрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Йулашки кунсем хушшинче Мурманск округĕнчи партин пуçламĕш организацисене сочувствуйушчине тата ПСК(б) Парти кандидатне кĕме зайавленисем нумай пама пуçланă. Зайавленисене суйлав кампани активисĕсем—участкăри суйлав комиссийĕ председателĕсемпе членĕсем, доверенныйсем, ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленес ĕçе коммуниссемпе пĕрле туса пынăскерсем, нумай параççĕ.

Полҍар районĕнчи партин пуçламĕш организацисене суйлав кунĕ иртнĕренпе ПСК(б) Парти кандидатне тата сочувствуйушчине кĕме 14 зайавлени, Мончегорск парторганизацине—çирĕм ытла зайавлени панă.

Иккĕмĕш пиатилеткă зайомĕн пилĕкĕмĕш тиражĕ пуçланнă

ВОРОШИЛОВГРАД, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче каçхине Ворошиловградра (Донецк облаçĕ) Ленин йачĕпе тăракан кулҍтурă дворецĕнче Иккĕмĕш пиатилеткă зайомĕн пилĕкĕмĕш тиражĕ пуçланнă. Хулана праçник чухнехи пек илемлетнĕ. Кулҍтурă дворецĕн залĕ халăхпа тулнă. Тиража Донбасри районсемпе хуласенчен хăнасем пынă. Тираж комиссийĕ составĕнче ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕсем—Сохостовскипе Шелковый, Донбасри паллă стахановецсем—Коробов, Степаненко, Кожухаров, т. ыт. те пур.

Тиражра 1.060 000 выҍав—пĕтĕмпе 173.920 000 тенкĕлĕх. Кунтнĕ тиражран утмăл пин выҍав (9 мĕлйун тенкĕлĕх) ытларах пулать.

Греци морйакĕсене вилĕмрен çăлнă

ОДЕССА, декабĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Хура тинĕс çинче вăйлă шторм пулнă пирки, Новороссийскран инçех мар, балласт тийесе пыракан „Океания“ йатлă Греци пароходне авари пулнипе хăйăр çине кĕртсе лартнă. Инкек пулни çинчен пароход пĕлтернĕ „SOS!“ сигнала Хура тинĕс радиостанцийĕ илтнĕ.

Пароходства начаҍникĕн Толковский йулташăн распорйаженийĕ тăрăх „Океания“ парохода пулăшу пама темиçе суднă кăларса йанă. Авари пулнă вырăна чи малтан „Пестель“ пароход çитнĕ. Вунпĕр баллă шторм, çăра тĕтре пулнине тата йĕри-тавра йапăх курăннине пăхмасăрах, „Пестель“ екипажĕ хăйĕн задачине кăтартулăн пурнаçа кĕртнĕ. „Океания“ командине пĕтнĕ суднă çинчен кăларса „Пестель“ çине лартнă.

Пайан каçхине вилĕмрен çăлнă Греци морйакĕсемпе пĕрле „Пестель“ Одессăна тавăрăнать.

62 сехет сывлăшра

„СССР. В-6“ дирижабаҍ анса лармасăр вĕçни

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче „ССРС В-6“ сывлăш карапĕ Мускав—Свердловск—Мускав хушшинчи пулас дирижабаҍ çулĕ тăрăх ниçта анса лармасăр вĕçсе тухнă. „ССРС В-6“ дирижабаҍ çак хĕллехи йăвăр вĕçеве декабĕрĕн 22-мĕшĕнче 20 сехет те 30 минутра тухса кайнă.

„ССРС В 6“ дирижабаҍ сывлăшра 62 сехет вĕçнĕ. Материаллă пайĕ пĕрмайах ним чарăнмасăр ĕçленĕ. 18 çынран тăракан карап екипажĕн кăмăлĕ лайăх. Вĕçнĕ чухне карапа дирижабаҍсен ескадрин командирĕ орденоносец Н. С. Гудованцев йулташ тытса пынă.

(ТАСС)

Çулталăкри плана тултарнă

Йетĕрнери çу çапакан завод декабĕрĕн 21-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана, улшăнман хакпа шутласан 101 процент тултарнă.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„КОЛХОЗА ÇАРАТАКАН“ йатлă заметкăра Шăхасан районĕнчи Имелеври колхоз счетоводĕнче ĕçлекен Кузьмин М. суйă документсемпе патшалăх банкинчен 668 тенкĕ те 16 пус колхоз укçине илсе тухни çинчен çырнăччĕ.

Заметкă пирки Шăхасан районĕнчи милици тытăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, корреспондент çырнă факт тĕрĕс пулнă. Кузьмина айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

Сентябĕрĕн 14-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра „ПРЕДСЕДАТЕЛĔН ЙРСĔР ĔÇĔСЕМ“ йатлă заметкă пирки Елĕк районĕнчи çĕрĕç пайĕнчен çакăн пек çырса пĕлтерчĕç: „Заметкăна вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Айăплисене ответ тыттарма ĕçе Елĕк районĕнчи милици тытăмне панă“.

Михайлов йалкорăн „ТАШМАНСЕМ ПĔТМЕН-ХА“ йатлă хаçатра тухман заметкине радакци тĕрĕслеме ПСК(б)П Вăрнар райкомне йанăччĕ.

Парти райкомĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Курбатова профсойуз членĕнчен те, ĕçрĕн те кăларнă.

„Кузнецов директорта ĕçлеме йурăхлă-ши“ тата „Кузнецовăн йрсĕр ĕçĕсем“ йатлă заметкăсене редакци тĕрĕслеме Йĕпреç районĕнчи çутĕç пайне йанăччĕ.

Çутĕç пайĕнчен заметкăсене вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăсем çинче çырнă фактсем пĕтĕмĕшпех тĕрĕс пулнă. Кузнецова Асанкассинчи туллимар вăтам шкулăн директорĕнчен кăларнă, ĕçе следстви органне панă.

Цирк

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Чăваш государствă филармонинче ĕçлекен циркачсем—Румйанцевпа Малахов Хĕрлĕ Чутайа килсе цирк кăтартрĕç. Циркачсем кăтартнă тĕрлĕрен акробатла тата жонглҍорла вăйăсем цирк курма пынă колхозниксемпе служашчисене килĕшрĕç.

Б—в.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн ĕнерхи номерĕнче пĕрремĕш страници çăра „Украинă халăхĕн праçникĕ“ йатлă статйана çапла пуçласа вулamala: Кийев, декабĕрĕн 24-мĕш. Çирĕм çул кайала, 1917 çулхи декабĕрĕн 24-мĕшĕнче...

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ССР Союз Финанс халăх комиссариачĕн Пĕтĕм Союзри финанспа економикăлă заочнă институчĕ

(ВЗИНО)

институтă студентсем йышăнат

Институт финанспа кредит системи ваҍҍи аслă квалификацилĕ работниксем хатĕрлет.

ИНСТИТУТА вăтам образованилĕ çынсене (1935 çулччен 9 çул вĕренмели шкултан вĕренсе тухнисене, йе 10 çул вĕренмели шкул, рабфак йе техникум пĕтернисене) вĕренме илеççĕ. Институтран вĕренсе тухнисем стационарлă финанспа економикăлă институтсенчен вĕренсе тухнисен мĕн пур прависене илеççĕ тата економист финансист квалификацине туйанаççĕ.

Институтри курса заочнă йĕркепе вĕренмеле

Вĕренмели çинчен тĕплĕн çырнă условисен, вĕренме йышăнас правилăсен, зайавлени формисен т. ыт. проспектне пĕрремĕш хут ыйтсанах ВЗИНО-н Хусанти пунктĕ йарса парать.

Адрес Казань, ул. Карла Маркса, дом № 43, Казанский финансово-экономический Институт им. В. В Куйбышева, комн. № 61—ВЗИНО.

ДИРЕКЦИ.

2—1

ЧĔРĔ ТИР ПАРАКАНСЕНЕ ПĔЛТЕРНИ

„Сойуззаготкож“-ăн Чăваш кантурĕ чĕрĕ тир паракансене пурне те çакна пĕлтерет:

кăçалхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа сысна тирĕсемшĕн тавар памалли нормăна ÿстерне.

Пур районсенчи заготконторăсем, тухса çÿрекен агентсем, базарсенчи ларйоксем тата выҍăх пусмали площадкăсем сысна тирĕшĕн çакăн чухлĕ таварсем параççĕ:

а) вăтам тата йăвăр сысна тирĕсемшĕн (4 килограмран иртсен) пĕр мăшăр подошвă,

б) çăмăл сысна тирĕсемшĕн (йăвăрĕш 4 килограм тарана çитиччен) пĕр мăшăр подметкă.

Тир паракан килĕшнĕ тăрăх сăрантан тунă урăх таварсем те илме пултарать (панă сысна тирĕн хакĕнчен 100 процентран ытлах мар).

„Сойуззаготкож“

„Росснабфилҍм“ трестăн Чăваш кантурĕ

Чăваш АСС Республикинчи кино театрсен екранĕсем çине кăларнă:

саслă, историлĕ филҍм

„ПУГАЧЕВ“

Ленинградри Ленин орденлĕ „Ленфилҍм“ киностудийĕ тунă.

Сценарий—О. Форш.

Режиссер—Петров—Бытов

САСЛĂ ÇĔНĔ КОМЕДИ

„ТАЙГА ЗОЛОТАЯ“

„Ленфилҍм“ киностудийĕ тунă.

Сценарий—Н. Погодин.

Режиссерсем—Г. Казанский тата М Руер.

ТĔП РОЛҍСЕНЧЕ: Борис Тенин, Нина Шатерникова, Нина Латонина, Степан Кайуков.

Вырăнсенчи кинотеатрсенче хаçан кăтартассине хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтернине асăрхăр!

Росснабфилҍм трестăн Чăваш Кантурĕ

ЙАЛХУÇАЛĂХ БАНКĔН ЧĂВАШ КАНТУРНЕ

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ системин бухгалтери учетне тата йалхуçалăхне пĕлекен

ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ

3—0

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Шупашкар—Ишек çулĕ çинче Кивпулăхпа Пархикасси йалĕсем хушшинче

Лаша пăрахса тарнă

тĕсĕ—хура-турă, çилхи сылтăм йенелле, 17 çулта.

Çак адреспа пĕлтермеле: Елĕк районĕ, Шĕмшеш йалсовечĕ, „Правда“ колхоз правленине.

Государствă банкĕн Чăваш кантурĕ тата районсенчи уйрăмĕсем

а) Декабĕрĕн 30-мĕш тата 31-мĕш кунĕсенче клиентсене ытти кунсенчи пекех йышăнаççĕ, анчах декабĕрĕн 31-мĕшĕнче, учитĕлсене ваҍҍи ĕçукçи панисĕр пуçне, Госбюджет тăрăх расходлă операцисем тумаççĕ.

б) Йанварĕн 1-мĕшĕнче (1938 ç.) канмалли кун, ку кун районсенчи уйрăмсенче те ĕçлемеççĕ.

Йанварĕн 2-мĕшĕнче (1938 ç.) банк кантурĕпе уйрăмĕсем алăксене хупса ĕçлеççĕ, клиентсене йышăнмаççĕ, анчах пухăннă укçана хывма илсе пыракансене йышăнаççĕ.

Çĕнĕ çул йачĕпе пулакан ачасен праçникĕ тĕлне

Шупашкарти „Бакалейа“ магазинĕ йолкă капăрлатмали йапаласем тата ачасем ваҍҍи кучченеçсем сутлăх кăларать.

Йолкă хатĕрĕсемпе куччеçсем тĕслĕренех пур

КУЧЧЕНЕÇСЕМ:

шоколад, конфект, премĕксем, печени тата мандаринсем—3 тенкĕлĕх, 4 тенкĕ те 50 пуслăх тата хаклăрахисем те пулаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

Чăвашсен Йалхуçалăх Институтне

Аслă шкулсене вĕренме кĕме хатĕрлекен курссене ваҍҍи преподавателсем кирлĕ:

Вырăс чĕлхипе
Математикă тăрăх
Физикă тăрăх
Географи тăрăх
Нимĕç чĕлхипе

Зайавленисене кирлĕ документсемпе 1937 çулти декабĕрĕн 25-мĕшĕччен çак адреспе памала: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 19. Йалхуçалăх Институчĕ.

3—2

ЧĂВАШМЕҌТРЕСТА

трест аппаратĕнче тата предприйатисенче ĕçлеме кирлĕ:

Стажлă механиксем
тата машинистсем
Економист-плановик
Квалификацилĕ меҍниксем
тата кĕрпе çуракансем
Бухгалтерсемпе
счетоводсем
Бухгалтер-ревизор.

Çак адреспа пымала: Шупашкар, Урицки урамĕ, 13. Телефон № 2—16.

5—2

Пурне те пĕлтерме

Кашни килсуртрах пĕчĕк кĕленчесем, банкăсем тата емел тыткалана пĕчĕк савăт-сапасем пур.

Çав хăвăра кирлĕ мар савăт-сапасене пĕтĕмпех пухăр та, сывăхри аптекăна йе аптекă магазинне леççе парăр.

Чăвашаптекоуправленин

ПУР АПТЕКИСЕМ те тата „САНГИГИЙЕНĂ“ МАГАЗИНĔСЕМ те

халăхран емел тыткаламалли кĕленчесем тата тĕрлĕ савăт-сапасем

СУТĂН ИЛЕÇÇĔ

Укçине çавăнтах тÿлеççĕ.

Чăвашаптекоуправлени.

Шупашкарти електростанци

пур предприйатисене, учрежденисене тата организацисене кăçалхи декабĕрĕн 25-мĕшĕччен

електроенерги моторсене ваҍҍи тата çуртсене çутатма мĕн чухлĕ кирлĕ пуласси çинчен, кашни кварталшăн уйрăм кăтартса

зайавкăсем тăратма ыйтать

Зайавкă паманнисем 1938 çулта електроенергипе усă кураймаççĕ.

3—0

Чуварлейри санатори пĕлтерет

КАНМАЛИ ПУТЕВКĂСЕНЕ

санатори хăй сутать

Путевкăсемшĕн укçа куçармалли текущи счет Государствă банкĕн Улатăрти уйрăмĕнче №150-116.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 989. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13790. 53—52 см. 1—1 л. п.